Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
НОЙАБĔР
17
КĔÇНЕРНИКУН
264 (5077) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Хамăрăн кадрсене марксисăм-ленинисăмпа хĕçпăшаллантармала

Пайан епĕр ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ „ПСК(б)П Историн Кĕске курсне" кăларнă май. парти пропагандине йĕркелесси çинчен йышăннă постановленине пичетлесе кăларатпăр. Пирĕн пĕтĕм парти, пĕтĕм партире тăракан тата партире тăман болъшевиксем çак постановленине пысăк интереспа тата тимлĕхпе йышăнса илĕç, мĕншĕн тесен, вăл болъшевикла пропагандăна организацилес ĕçре çĕнĕ тапхăр, çĕршывăн идейăлă пурнăçĕнче çĕнĕ çĕкленӳ пулнине пĕлтерет.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" парти истори тăрăх халиччен çырнă учебниксем пек „иртнĕ вăхăтри ĕçсем çинчен çăмăллăн та ăнланмала мар каласа пани" мар, вăл болъшевисăмăн идейăлă хăватлă хĕçпăшалĕ, вăл марксисăм-ленинисăм облăçĕнчи тĕп пĕлӳсен енциклопедийĕ, вăл марксисла-ленинла теорин питĕ те пысăк вăйĕсене кăтартса пани, вăл хамăр кадрсене болъшевисăмпа хĕçпăшаллантармали хăватлă средствă.

Партин Тĕп Комитечĕ çак научнăй кĕнекене туса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçленĕ чухне партине — пĕрлĕхлĕ руководствă, парти историпе марксисăм-ленинисăма официаллă, ПСК(б)П Тĕпкомĕ тĕрĕсленипе ăнлантаракан руководствă парас задачăна асра тытнă. ПСК(б)П Тĕпкомĕ схоластиксемпе вулгаризатăрсем марксисăмпа ленинисăм пропаганди хушшинче йурийех тăвакан уйрăмлăха пĕтерес задачă лартнă. ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă ПСК(б)П Историйĕнче „ЛЕНИНИСĂМ ВĂЛ МАРКСИСĂМА МАЛАЛА АТАЛАНТАРСА ПЫНИ, ПРОЛЕТАРИАТĂН КЛАС КĔРЕШĔВĔН ÇĔНĔ УСЛОВИЙĔСЕНЧИ МАРКСИСĂМ, ИМПЕРИАЛИСĂМПА ПРОЛЕТАРИЛĔ РЕВОЛЮЦИСЕН САМАНИНЧИ МАРКСИСĂМ, ÇĔРĔН УЛТТАМĔШ ПАЙĔНЧЕ СОЦИАЛИСĂМ ÇĔНТЕРНĔ САМАНАРИ МАРКСИСĂМ ПУЛСА ТĂНИНЕ" (ПСК(б)П Историйĕнчен) пĕтĕм вăйпа паллă туса кăтартнă.

Çапла пулин те, пропагандă ĕçĕн практикинче, аслă шкулсенче вĕрентес практикăра марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕн уйăрăлми пĕрлĕхпе çыхăнса тăракан тĕп пайĕсене пĕр-пĕринчен йскусственнă уйăрни пулнă. Диалектикăлă тата историлĕ материалисăма ленинисăмран уйăрса илнĕ, парти политикине историлĕ материалисăмран уйрăм илсе пăхнă.

ПСК(б)П историйĕ пирĕн кадрсене ИДЕЙĂСЕМ тăрăх вĕрентсе çитĕнтерет. Историлĕ фактсем вулакан умне ĕçпе кĕрешӳри марксисăм-ленинисăма кăтартса параканни, практикă çумне хунă революцилĕ теорийе кăтартса тухса тăраççĕ. Кĕнекене марксисăм-ленинисăмпа хĕçпăшалланнă, çак теорине ĕçе йама пĕлекен, иртнĕ саманари опытсем тăрăх пирĕн кунсенчи событисен тĕпне-йĕрне тупма пĕлекен болъшевикла ПОЛИТИКСЕНЕ воспитани пама кăларнă.

ПСК(б)П историйĕн кĕнеки малтанхи страницăран пуçласа йулашки страницăна çитиччен пирĕн кадрсене революцилĕ теорин вăйĕпе пĕлтерĕшне хаклама вĕрентет. Пирĕн партин идеологи никĕсĕсене хывса, Ленин хăйĕн „Что делать?" йатлă чаплă кĕнекинче çырнă: „Революцилĕ теорисĕр революцилĕ практикă та пулма пултараймасть... МАЛТА ПЫРАКАН БОРЕЦĂН РОЛЬНЕ МАЛТА ПЫРАКАН ТЕОРИ ТĂРĂХ ĔÇЛЕСЕ ПЫРАКАН ПАРТИ КĂНА ТУМА ПУЛТАРАТЬ". Болъшевиксен партийĕ чи йăвăр условисенче, вăл малта пыракан теорипе хĕçпăшалланнине пула, обшчĕствăлă аталанупа политикăлă кĕрешĕвĕн саккунĕсене пĕлнине, ĕçе ăçтала илсе пынине пĕлнине пула çеç чаплă çĕнтерӳсем тума пултарнине истори пĕр хут çеç мар тĕслĕхсемпе кăтартать. 1928—1930 çулсене, ун чухне пирĕн парти, Сталин йулташ йертсе пынипе, йала коллективизацилесси пек йăвăр та ĕмĕрте пулман ĕçе тытăннă вăхăта аса илсен те çителĕклĕ пулать. Тăшмансем тем пек хайарран хирĕçрĕç пулсан та, парти çĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен, вăл хăй мĕн тунине тата халăха ăçтала илсе пынине пĕлнĕ.

Пирĕн кадрсем, пирĕн работниксем малта пыракан теорине вĕренсе алла илсен, хăйсем теори йенчен кайа йулнине пĕтерсен вĕсен политикăлă витĕр курассипе çирĕплĕхĕ мĕн пек хăпарассине, вĕсем мĕн пек ӳсессине курма йăвăр мар.

ПСК(б)П историйĕ пичетленсе тухни— пропагандă ĕçне пирĕн кадрсене идейă йенчен хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе тăракан задачăна пурнăçа кĕртме килĕшӳлĕ организацилес ыйтăва пĕтĕм пысăккĕшĕпе кăларса тăратрĕ. Çав вăхăтрах пропагандă ĕçĕнче нумай çитменлĕхсем пур. Кружоксем урлă сăмах вĕççĕн пропагандăласси ку таранччен парти вĕрентĕвĕнче тĕп формă пулса тăнă. Парти организацисем коммуниссене болъшевиксен партийĕн историйĕпе теорине болъшевиксен вăтă ăрувĕн опычĕсем тăрăх ХАРПĂРХĂЙ ТĕЛЛĕН вĕрентмеле тăвас вырăнне, кружоксем туса тултарнă. Пичетпе, пичетри пропагандăпа пысăккăн усă курас вырăнне (кун пек тума пирĕн пысăк майсем пур), тĕп формă пулса тăракан пичетри пропагандăна сăмах вĕççĕн пропагандăпа çыхăнтарса пырас вырăнне, парти организацисем коммуниссене кружоксене „хутшăнтарасси" хыççăн кайнă, пропагандăна тивĕçлипе йертсе пырассине аларан вĕçертнĕ.

Çавнашкал пăсăк ĕçсем пропагандă пахалăхĕ çине хыттăнах пырса тивнĕ. Партийĕçсем пуçламĕш классенчи ĕмĕрхи школьниксем пулса тăнă. Политикăлă занятисен çавнашкал метăчĕсем коммуниссене хăйсен пултарулăхĕ çине шанми тунă, нумай коммуниссене теорине вĕренсе алла илесси ытла та йăвăр ĕç пек, вăй çитми ĕç пек туйăнма пуçланă. Партин Тĕп Комитечĕ çакнашкал пăсăк ĕçсене сивлерĕ. ПСК(б)П Тĕпком постановленинче каланă: „Коммуниссен марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илме хăйсем вăй çитерес тата пултарас шанăçа çĕнĕрен туса хумала".

ПСК(б)П историне ĕçлекен кадрсене тата вĕренекен кадрсене валли кăларнă. Вĕсем пирĕн, çĕнĕ, советлă интеллигенци, рабочи класпа хресченсен ӳчĕпе йунĕнчен тухнă интеллигенци. Епĕр Совет халăхĕ хăйĕн интеллигенцине тунипе мухтанма пултаратпăр. Унăн аслă тӳллевĕ— халăхшăн ĕçлесе тăрасси. Совет интеллигенцийĕ политикăлă пысăк вăй, интеллигенцисĕр пĕр государствă та, пушшех те ССР Сойузĕ — хуçалăхпа културăн пур отрăçлисене те тытса пыракан государствă, пурăнма пултараймасть.

Çав вăхăтрах пирĕн çĕнĕ, советлă интеллигенци çине йĕрĕнсе пăхнине çаплах пĕтереймен-ха. Партире тăракан тата партире тăман интеллигент çине, вăл ĕнер çеç стаханăвĕц пулнă пулсан та, çӳлтен, иккĕмĕш сортри çын çине пăхнă пек пăхнине çаплах тĕл пулма пулать-ха. Совет интеллигенцийĕ çине çакнашкал тискер, хулиганла пăхассине, совет государствишĕн хăрушăскере, пĕтерес пулать.

Вунă çул ытла кайарах, комсомолăн VIII-мĕш сйесĕнче тухса каланă чухне, Сталин йулташ каланă:

„Пирĕн хамăрăн културăсăрлăха мухтав йурри йурлама хатĕр çынсем пур. Есĕ хут пĕлместĕн пулсан, йе тĕрĕс мар çыратăн пулсан, хăв кайа йулнипе мухтанатăн пулсан, есĕ вара „станок" умне тăрса ĕçлекен рабочи, сана чыс та хисеп. Есĕ културăсăрлăхран тухнă, хут вĕреннĕ, наукăна вĕренсе алла илнĕ пулсан, вара есĕ йут çын, „массăран" уйăрăлса кайнă, рабочи пулма пăрахнă çын. Епĕ шухăшлатăп: çак варвăрлăхпа тискерлĕхе çунтарса кăлармасăр епĕр пĕр утăм та малала кайас çук. Рабочи клас културăсăрлăхран тухма пултарма пĕлмесĕр, вăл хăйĕн интеллигенцине тума пĕлмесĕр, вăл наукăна вĕренсе алла илмесĕр çĕршывăн чăн-чăн хуçи пулса тăма пултараймасть, хуçалăха наукă никĕсĕ çинче тытса пыма пултараймасть".

Рабочи клас, хресченсем хăйсен интеллигенцине турĕç. Ăна пирĕн хаклас, хисеплес пулать. Çакна манма йурамасть: пирĕн интеллигенцин пĕр пайĕ, пирĕн кадрсен пĕр пайĕ йутçĕршыв разведкисен, вĕсен троцкисла-бухаринла, буржуалă националисла агентурин аллине кĕрсĕ ӳкрĕç, мĕншĕн тесен, вĕсен политикăлă пиçĕхӳ пулман, мĕншĕн тесен, пирĕн парти организацисем интеллигенцине политикăлă воспитани парас ĕçе пăрахнă пулнă.

Партин Тĕп Комитечĕ коммуниссене кружока хисеп йенчен хутшăнтарасси хыççăн кайнине сивлесе, болъшевикла пропагандăна организацилемели аслă программă хатĕрлерĕ. Марксисăм-ленинисăм пропагандин никĕсне „ПСК(б)П Историн Кĕске курсне" хунă. Марксисăм-ленинисăм теорине харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пулăшас ĕçе лекцисем, консултацисем, пичетри пропагандăн пĕтĕм формисем пыраççĕ. Кружоксенче вĕренесси пĕтĕмпех ирĕклĕ ĕç. Кружоксен хисепĕ чылайах чакмала. Парти историне дифференцацилĕ вĕренмели формăсем тунă, пропагандиссене хатĕрлемели системă кăтартса панă, пичетри пропагандăн пысăк ролне паллă тунă, пичетри пропагандăпа сăмах вĕççĕн пропагандă пĕр-пĕринчен уйăрăлса тăнине пĕтернĕ.

ПСК(б)П Истори пичетленсе тухни пирĕн кадрсем хăйсем теори йенчен кайа йулнине пĕтерес йенне çавăрăнассин пуçламăшĕ пулмала. Парти организацисĕн задачĕ—пирĕн партин Тĕп Комитечĕн çакă решенийĕ çинчен анлăн ăнлантарса парасси пулать.

Уйрăмах ответлă задачсем теори фронтĕнчи работниксем умне тухса тăраççĕ. Вĕсен теорилĕ шухăш чăтма çук йулса пынине, чи çивчĕ теорилĕ ыйтусене хăйулăн лартма хăраса тăнине татăклăн та хăвăрт пĕтермеле, буквойедствăна, схоластикăна, марксисăм-ленинисăмăн уйрăм положенисене вулгаризациленине пĕтерес пулать, марксисла-ленинла теорине малала йарса пыракан теорилĕ ыйтусене хăйулăн кăларса тăратас пулать.

„ОБШЧĔСТВĂ АТАЛАНĂВĔН САККУНĔСЕНЕ ПĔЛНИПЕ ХĔÇПĂШАЛЛАНТАРАКАН МАРКСИСĂМ — ЛЕНИНИСĂМ ТЕОРИНЕ ВĔРЕНСЕ АЛЛА ИЛНИПЕ ПИРĔН КАДРСЕМ ЧĂННИПЕ НИКАМ ÇĔНТЕРЕЙМИ ПУЛСА ТĂРĔÇ, ÇАК ТЕОРИ ЙАЛАВĔ АЙНЕ ТĂРСА „ЛЕНИН—СТАЛИН ПАРТИ ЙЕРТСЕ ПЫНИПЕ ПĔТĔМ СОВЕТ ХАЛĂХНЕ КОММУНИСĂМ ÇĔНТЕРĔВĔ ПАТНЕ ТАТА АНĂÇЛАРАХ ИЛСЕ ПЫРĔÇ".

„Правда" умстатйи, 1938 ç. нойабĕрĕн 15-мĕш.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленийĕ

I.

„Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партин Историйĕн Кĕске курсĕ" пичетленсе тухни болъшевиксен партин идейăлă пурнăçĕнче пит пысăк событи пулса тăрать. „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" тухсан, парти болъшевисăмăн идейăлă çĕнĕ хăватлă хĕçпăшалне, марксисăм-ленинисăм облăçĕнчи тĕп пĕлӳсен енциклопедине илчĕ. Парти историйĕн курсĕ—болъшевисăмăн наукăлă историйĕ. Çак историре коммуниссен партин гигантла опытне çырса панă тата пĕр çĕре пĕтĕçтернĕ, кун пек опыт тĕнчери пĕр партин те пулман, çук та.

„Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партин Историйĕн Кĕске курсĕ" болъшевисăма вĕренсе алла илес, парти членĕсене марксисăм-ленинисăм теорийĕпе, урăхла каласан, обшчĕствăлă аталанăвăн тата политикăлă кĕрешӳн саккунĕсене пĕлнипе хĕçпăшаллантарас задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре пит паха средствă, партири тата партири мар болъшевиксен политикăлă сыхăлăхне ӳстермели средствă, марксисăм-ленинисăм пропагандин ĕçне теорилĕ кирлĕ пек çӳллĕше хăпартмали средствă пулса тăрать.

„Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партин Историйĕн Кĕске курсне" туса хатĕрлесе, ПСК(б)П Тĕпкомĕ çак задачăсене умра тытнă:

1) Партийе парти историйĕ тăрăх пĕрлĕхлĕ руководствă, ПСК(б)П историн тата марксисăм-ленинисăмăн тĕп ыйтăвĕсене официаллă, ПСК(б)П Тĕпкомĕ тĕрĕсленипе ăнлантаракан, мĕнле килчĕ апла ăнлантарма нимĕнле ирĕк те паман руководствă памала пулнă. „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне", ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланăскерне, кăларнипе парти историне мĕнле килчĕ çапла çырса парасси тата пăтратасси, парти теорин тата парти историн чи паха ыйтăвĕсем çине тĕрлĕ майлă пăхнине пит нумай пулни тата мĕнле килчĕ çапла ăнлантарни, парти историйĕ тăрăх иртнĕ вăхăтра кăларнă чылай учебниксенче пулнăскерсем, тĕппех пĕтмеле.

2) ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" туса хатĕрлесе, ПСК(б)П Тĕпкомĕ хăй умне пропагандă ĕçĕнче марксисăм тата ленинисăм хушшинчи сийенлĕ уйрăмлăха пĕтерес задачă лартнă, çав уйрăмлăх вăл йулашки çулсенче пулса тăнă тата çакăн патне илсе пынă: ленинисăм марксисăм никĕсĕ çинче ӳссе аталаннине, марксисăм ленинисăмăн никĕсĕ пулса тăнине, ленинисăмăн çав никĕсне пĕлмесĕр ленинисăма ăнланма çуккине манса кайса, ленинисăма хăйне тĕллĕн вĕрентӳ вырăнне—марксисăмран уйăрса, диалектикăлă тата историлĕ материалисăмран уйăрса, парти историнчен уйăрса вĕрентме тытăннă.

„ПСК(б)П Историйĕн Курсне" туса хатĕрлесе, ПСК(б)П Тĕпкомĕ хăй умне ПСК(б)П теорийĕ тата историйĕ тăрăх çакăн пек руководствă парас задачă лартнă: пĕрлĕхлĕ марксисла-ленинла вĕрентӳн искусственнă хăйпăтса уйăрнă составной пайĕсене—диалектикăлă тата историлĕ материалисăма тата ленинисăма малтан пулнă пек пĕр-пĕтĕме пĕтĕçтернĕ пултăр, историлĕ материалисăм вара парти политикипе çыхăнса тăнă пултăр,—çакăн пек руководствă парас задачă лартнă: унта Марксăн тата Ленинăн вĕрентӳвĕн уйăрăлми пĕрлĕхне, пĕтĕмĕшлĕхне тата преемственнăçне, марксисăм-ленинисăм пĕрлĕхне кăтартса панă пултăр, тата Ленинпа унăн ученикĕсем пролетариатăн империалисăм тата пролетариат революцисен епохинчи клас кĕрешĕвĕн çĕнĕ опытне пĕр çĕре пĕрлештернĕ никĕс çинче марксисла теорийе çĕнĕрен мĕн кĕртнисене çырса панă пултăр.

3) Хăшпĕр кивĕ учебниксенчен, ПСК(б)П историне пуринчен малтан историри çынсем тавра каласа панăскерсенчен тата кадрсене уйрăм çынсемпе вĕсен биографийĕсем тăрăх воспитани парассине асра тытнăскерсенчен пачах урăхла, — „Кĕске курс" парти историне марксисăм-ленинисăмăн тĕп идейисене сарса пынă никĕс çинче çырса парать тата парти кадрĕсене, чи малтан, марксисăм-ленинисăм идейисем тăрăх воспитани парассине асра тытать.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" туса хатĕрлесе, ПСК(б)П Тĕпкомĕ марксисăм-ленинисăм вĕрентӳне историлĕ фактсен никĕсĕ çинче каласа парас задачăна шутра тытнă. ПСК(б)П Тĕпкомĕ çакна асра тытнă: марксисла-ленинла теорийе çакăн пек çырса пани ĕç интересĕсемшĕн чи килĕшӳлĕрех, мĕншĕн тесен историри фактсем çинче марксисăм-ленинисăмăн тĕп идейисене кăтартса пама лайăхрах, йестественнăйрах тата ăнланмаларах, мĕншĕн тесен ПСК(б)П историйĕ хăй ĕçпе кĕрешӳри марксисăм-ленинисăм пулса тăрать, мĕншĕн тесен марксисла-ленинла теори тĕрĕссине тата пурнăçлăхне практикăпа, пролетариатăн клас кĕрешĕвĕн опычĕпе тĕрĕсленĕ, тата марксисла-ленинла теори хăй практикăпа тачах çыхăнулă пулса, пролетариатăн революцилĕ кĕрешĕвĕн практикăлă опытне пĕрлештернĕ никĕс çинче аталанса тата пуйанланса пынă.

4) „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" туса хатĕрлесе, ПСК(б)П Тĕпкомĕ марксисла литературăна марксисăм-ленинисăм теорин тата парти историн чылай ыйтăвĕсене ăнлантарнă чухнехи упрошченствăпа вулгаризацинчен хăтарас задачă лартнă.

Çавăн йышши вулгаризаци тата упрошченчествă, тĕслĕхрен, йулашки вăхăтченех сарăлнă шухăшсенче—личнăçăн историри ролĕ çине кусĕретех марксисăма хирĕçле пăхнисенче, парти тахçанах сивленĕскерсенче палăрнă, — личнăçăн историри ролĕ çинчен тăракан ыйтăва хăшпĕр суйа-теоретиксем тата пропагандиссем çурма-есерле позицисенче тăрса каласа панă.

Пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтерни çинчен ыйтăва тĕрĕс мар ăнлантарни марксисăм-ленинисăма çавăн пек вулгаризациленни тата упрошченчествă пулать.

Кучухнехи епохăри вăрçăсен характерĕ çинчен тăракан ыйту тăрăх марксисла-ленинла шухăшсене пăснисем, тӳрĕлĕхлĕ тата тӳрĕлĕхлĕ мар вăрçăсем хушшинчи уйрăмлăха ăнланманни, болъшевиксем çине хăйне йеверлĕ „пацифисисем" тесе тĕрĕс мар пăхни анлăн сарăлса кайнă.

Историлĕ наукăра йулашки вăхăтченех марксисăма хирĕç пырса пăснисем тата вулгаризатăрствă Покровский „шкулĕ" тенĕскерпе çыхăнса тăнă, вăл историлĕ фактсене пăсса ăнлантарнă, историлĕ материалисăма хирĕç пырса вĕсене (историлĕ фактсене) пайан кунхи тăрăх пăхса, историлĕ событисем çав обстановкăра пулса иртнĕ условисем тăрăх мар çутатса панă, тата, çапла тунипе, чăн-чăн историне пăснă.

Чăн-чăн историне историйе хирĕçле фалсификацилени, историне, ăна тĕрĕссипе каласа парас вырăнне, историйе хирĕçле хитрелетме хăтланнисем, тĕслĕхрен, çакăн патне илсе пынă: пирĕн пропагандăра парти историне хăш чухне вăл талккишпех çĕнтерӳсен çулĕ, нимĕнле вăхăтлăха парăнусемпе кайала чакнисемсĕр, пулнă пек туса кăтартнă, çак вăл куçкĕретех историри чăнлăха хирĕçле тата, çапла туни, кадрсене тĕрĕс воспитани парассине чăрмантарать.

Марксисăма хирĕçле вулгаризатăрла пăтратни çавăн пекех тата совет государстви çине тĕрĕс мар пăхакан шухăшсене сарнинче, социалисăм çĕнтерӳне тумали тата ĕççыннисен социалисăмла çĕнтерсе илнисене капиталисăмлă йĕритавралăхран сыхламали рабочисемпе хресченсен аллинчи тĕп хĕçпăшал пулса тăракан социалисăмлă государствăн ролĕпе пĕлтерĕшне пĕчĕклетнинче палăрнă.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" марксисăм-ленинисăм установкисене кайала тавăрса, марксисăм-ленинисăма çакăн пек тата çавăн майлă вулгаризацилениие тата пăснине тĕп туса хурать.

5) „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" туса хатĕрлесе, ПСК(б)П Тĕпкомĕ хăй умне—обшчĕствă аталанăвĕн саккунĕсене научнă уçса паракан марксисла-ленинла теорин,—çав саккунсемпе пролетариатăн революцилĕ ĕçне йертсе пыма усă курма вĕрентекен теорин,—пур тĕрлĕ наукă пекех, пĕрмайах аталанса тата малала кайса пыракан, кивелсе кайнă уйрăм положенисемпе вывăдсене историлĕ çĕнĕ условисемпе килĕшӳлĕ çĕнĕ вывăдсемпе тата положенисемпе улăштарма хăраман теорин вăйĕпе пĕлтерĕшне йар-уççăн кăтартса парас задачă лартнă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ çакна шутра тытнă: пирĕн кадрсем марксисăм-ленинисăм теорине пĕлмесен, болъшевисăма вĕренсе алла илмесен, хăйсем теори тĕлĕшпе кайа йулнине пĕтермесен икĕ урипех уксахлĕç, мĕншĕн тесен социалисăм строителствин пур отрăçлисене те тĕрĕс йертсе пырас задачă практиксем марксисăм-ленинисăм теорин никĕсĕсене вĕренсе алла илме хушать, практикăлă ĕçĕн ыйтăвĕсене татса панă чухне теори тăрăх ĕçлеме пĕлнине ыйтать.

Теорине вĕренсе алла илме работниксен пысăк мар ушкăнĕ çеç вăй çитерме пултарать, тесе шухăшлани йанăш. Марксисла-ленинла теорийе вĕренсе алла илесси— ĕçлесе тупмали йапала. Шăпах та халĕ, Совет влаçĕ чухне тата ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерӳ тунă чухне, хамăрăн йертсе пыракан кадрсене марксисла-ленинла теорийе ăнăçлăн вĕренсе алла илме, парти историне, Маркс, Енгелс, Ленин, Сталин произведенийĕсене вĕренме нимĕнпе пӳлмен майсем туса панă. Марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла илме—çавна тăвас килни çеç, çав тĕллеве пурнăçа кĕртнĕ чухне çине тăни тата çирĕп характерлă пулни çеç кирлĕ. Çакăн пек наукăсене, сăмахран, физикăна, химине, биологине ăнăçлăн вĕренсе алла илме пулать пулсан, марксисăм-ленинисăм наукине пĕтĕмĕшпех вĕренсе алла илме пуласси пирки иккĕленме пушшех те сăлтав çук.

6) „ПСК(б)П Историйĕн Курсне" туса хатĕрлесе, ПСК(б)П Тĕпкомĕ теорилĕ тата пропагандисла ĕçсене туса пыракан кадрсене çĕнĕле йĕркеленме, ĕç пахалăхне лайăхлатма, хăйсем теори тĕлĕшпе кайа йулнине пĕтерме пуçлама, хăйсен идеологилĕ хатĕрленĕвĕнчи çитменлĕхĕсемпе сикчевĕсене пĕтерме тата пропагандисла ĕçе кирлĕ пек çӳллĕше хăпартма пулăшас задачă лартнă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ лартнă çак пур задачăсене те „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕнче" татса панă.

II.

Мĕнле-ха пропагандисла ĕçри тĕп çитменлĕхсем?

Партин пропагандисла тата теорилĕ ĕçне хăш йенпеле çĕнĕле йĕркелесе йама кирлĕ?

1) Парти пропагандине йĕркелес çĕрти тĕп çитменлĕх —парти пропагандине йертсе пырас ĕçре кирлĕ централизацилĕх çукки тата пропагандă ĕçĕнчи çавăнтан тухса тăракан кустаршчинăпа организацисĕрлĕх пулса тăраççĕ.

Парти пропаганди ĕçĕнчи кустарничествăпа организацисĕрлĕх чи малтан çакăнта палăрнă: парти организацисем, кружоксенче пропагандă тăвас метăд пуринчен ытла партин вăрттăн ĕçленĕ вăхăтра, партин çав вăхăтри ĕç условисене пула вырăнлă пулнине, Совет влаçĕн условисенче тата болъшевиксен партин аллинче пропагандăн пичет пек хăватлă хатĕрĕ пур чухне, пропагандăна нимĕн пӳлмесĕр сарса йама тата ăна централизацилĕ йертсе пыма пĕтĕмпех çĕнĕ условисемпе майсем тунине манса кайса, пропагандăн тĕп форми вырăнне кружоксем урлă сăмах вĕççĕн пропагандă тăвассине суйласа илнĕ.

Çав майсемпе усă курас вырăнне, парти организацисем, халъхи условисенче кружоксем ĕнтĕ хамăрăн кадрсене болъшевисăма вĕрентмели тĕп метăд пулма пултарайманнине, кадрсене марксисăм-ленинисăма вĕрентмели тĕп метăд болъшевиксен аслăрах ăрăвĕн опычĕпе тĕрĕсленнĕ метăд—болъшевиксен партин историпе теорине харпăрхăй тĕллĕн вĕренесси пулмалине, партин кадрсене вăл тĕлĕшпе пичет урлă тата вĕсен вĕреннĕ чухне тухса пыракан ыйтусем тăрăх централизацилĕ пысăк квалификацилĕ консултаципе, лекцисемпе, докладсемпе т. ыт. те пулăшмалине шута илмесĕр, халĕ те пропагандăн кивĕ формисенчен çатăрласа тытса пыраççĕ.

Пропагандăн тĕп форми вырăнне кружоксем урлă сăмах вĕççĕн пропагандă тăвассине суйласа илсе, парти организацисем партилĕ кружоксен хисепне сарма, нимепăхмасăр тата обйазателнă йĕркепе коммуниссене пурне те партилĕ кружоксемпе „çавăрса илме" тĕллев лартса, коммуниссене пурне те кружоксене пĕрлештерме пуçарса йанă йанăш ĕçпе хаваслланса кайнă.

Кружоксен хисепĕ хыççăн хăваласа, парти организацийĕсем тĕп ĕçе—пропагандă пахалăхне аларан вĕçертсе йанă.

Кружоксем пит нумай пулни, парти организацисене пропагандă ĕçне чăннипе контролъламели майсемсĕр хăварса, çакăн патне илсе пынă: парти организацисем пропагандăна йертсе пырас ĕçе хăйсен аллинчен вĕçертсе йанă, хăйсем пуринчен ытла коммуниссене кружоксенче вĕрентме „хутшăнтарни" çинчен, вĕсен хисепĕ çинчен тата вĕсем унта çӳрени çинчен канцелярилле-статистикăла сведенисем пухассипе ĕçленĕ. Çакна пула кружоксем хăйсем пĕлнĕ пек ĕçлесе пыракан автономлă, контролсăр организацисем пулса тăнă.

Кружоксем пит нумай пулни, малала, çакăн патне илсе пынă: пропагандиссен кадрĕсем теори тĕлĕшĕнчен сахал хатĕрленнĕ, часчасах тата политикăна пĕлмен, ĕçре тĕрĕсленмен çынсемпе тулса ларнă, вĕсем парти членĕсемпе партире тăман çынсене болъшевисăма вĕренсе алла илес ĕçре пулăшма пултараймаççĕ çеç мар, тата вĕсем марксисăм-ленинисăм теорине каласа парассине сийенлĕ упрошченчествăпа улăштарма тата итлекенсене пăтраштарса йама çеç пултараççĕ.

Пропагандиссен хисепĕ хыççăн хăваласа, парти организацийĕсем пропагандиссен кадрĕсене хатĕрлессине тата тепĕр хут вĕрентсе хатĕрлессине теори тĕлĕшпе йертсе пырас ĕçе, пропагандиссен кружоксенчи ĕçĕсене контрол туса пырассине хăйсен аллинчен вĕçертсе йанă. Пропагандиссене йертсе пырассине централизацилес тата çав майпа пропагандиссемпе ĕçлессин пахалăхне хăпартас вырăнне, парторганизацисем ку ĕçре те хисеп патне йанăш çул тытнă, предприйатисем çумĕнче парткабинетсем, пропагандиссен çеминарĕсем, пропагандиссен кĕске срукла курсĕсем тата ыт. те нумай туса тултарса, пропагандиссен кадрĕсене пулăшу парас ĕçе сапалантарса йанă. Пахалăха сийен кӳрсе çак учрежденисен хисепĕ хыççăн хăвалани çакăн патне илсе пынă: парткабинетсем тата пропагандиссен çеминарĕсем кирлĕ партилĕ руководствăсăр тăрса йулнă, пропсеминарсемпе парткабинетсен руководителĕсен квалификацилĕ кадрĕсем çителĕксĕр пулни вара вĕсен ĕçĕн пахалăхĕ чакасси патне, вĕсен ĕçĕпе пропагандиссем кăмăлсăр пуласси патне илсе пынă, çеминарсемпе кабинетсене çӳрессине формалънăй повиннăç туса хунă.

Кружоксене çӳрессине парти членĕсемшĕн обйазаннăç туса хурса, партийĕçсене пуçламĕш классенчи ĕмĕрхи школъниксем вырăнне, марксисăма-ленинисăма хăйсем тĕллĕн вĕренме пултарайманскерсем вырăнне хурса, парторганизацисем парти членĕсене кружоксене хутшăнтарма тата унта тытса тăма администрацилĕ йурăхсăр чылай майсемпе усă курнă, коммуниссен кружоксенчи ĕçне вак-тĕвек опекăна илес тата регламентла çул çине тăнă.

Кружоксен ĕçĕнче парти членĕсен идейĕпа политикă тĕлĕшĕнчи ӳсĕмне чарса тăракан тĕрĕс мар, школъярла метăдсем тĕп вырăнта пулнă, ку вăл—кружоксем пурте „пĕр кунта" ĕçлемеле тунинче, вĕсен ĕçĕсем валъли пĕр пек регламентсем тунинче, каласу метăчĕсене тата йулташла чĕрĕ дискуççи метăчĕсене кружоксенчен хăваласа кăларнинче палăрнă.

Çакăнпа чарăнса тăмасăр, парторганизацисем марксисла-ленинла кĕнекене вулакана кашнинех „контролълес" тата вуласа тухни çинчен

Малали 2-мĕш страницăра

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ кăларнă май партин пропагандине йĕркелесси çинчен

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленийĕ

МАЛАЛИ

отчот тугарас бÿрократла сиенлĕ ĕç тума тытăннă.

Пропагандисла ĕçри çак тĕрĕс мар установкăсене пула, темиçе çул хушши пĕр-пĕр кружокра вĕренсе пыма тивĕç тата марксисла-ленинла литературăна хăйсен килĕсĕнче вĕренес ĕçре кирлĕ пек пулăшусăр тăрса йулнă коммунисĕн теорине вĕренес интересĕ пĕтсе пырать, кружоксен заняатийĕсене çÿрессн вара час-часах йавăр чăрмав ĕç пулса тăрать.

Кружоксене кĕнĕ чухнехи ирĕклĕх принципне пăсни, парти членĕсене кружоксене механически ирĕксĕрлесе хутшăнтарнă бÿрократла-административлă практикă, кружоксем çине вĕсем партилĕ веренÿн пĕртен-пĕр форми тесе йанăш пăхни, партийĕцсен вĕсем марксисăм-ленинисăма харпăрхăй тĕллĕн вуласа ăнăçлан вĕренме пултарас шанчăкне пĕтернĕ. Çавăнпа вара коммуниссем марксисăм-ленинисăм никĕсĕсене таранăн, хăйсем тĕллĕн вĕренес ĕçе, парти кадрĕсем идейă тĕлĕшпе ÿсес ĕçе сиен кÿнĕ.

Коммуниссен марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илме хăйсем вăй çитерес тата пултарас шанăçа çĕнĕрен туса хума кирлĕ.

Чăннипе илсен марксисăм-ленинисăма вĕренмели чи кирлĕ тата тĕп мел вăл харпăрхăй тĕллĕн вулани пулса тăнă вăхăтрах, марксисăм-ленинисăма кружокра çеç вĕренме пулать, текен сиенлĕ суйа шухăша çапса салатас пулать.

2) Пичет урлă пропагандă тăвасси не сийен кÿрсе кружоксенче ĕçлессине тата сăмах вĕççĕн пропагандă тăвассине пĕтĕмĕшпе виçесĕр вĕрсе хăпартса йанин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл—пичет урлă тăвас пропагандăпа сăмах вĕççĕн пропагандăлассине организацилес, ĕçе пĕр-пĕринчен сийенлĕн уйăрни пулнă, çакă вăл обкомсенче те, крайкомсенче те тата нацкомпартисен Тĕпкомĕсенче те, çавăн пекех ПСК(б)П Тĕпкомĕн аппаратĕнче те пропагандă пайĕсемпе пичет пайĕсем пĕр-пĕринчен уйрăм ĕçлесе пынинче палăрнă.

Марксисăм-ленинисăма пропагандăлассинче тĕп тата ĕçе татса паракан хĕçпăшал пичет—журналсем, хаçатсем, брошÿрăсем пулса тăмала, сăмах вĕççĕн пропагандă туни вара пулăшса пыраканĕн вырăнне йышăнмала. Пичет пĕр-пĕр чăнлăха пĕр тăрукак пурин патне те çитерме май парать, çавăнпа вăл сăмах вĕççĕн туна пропагандăран вайлăрах. Пропагандăна йертсе пырас ĕçе икĕ пай хушшинче уйăрса вакланн пичетĕн марксисăм-ленинисăма пропагандăлас ĕçри роļне пĕчĕклетесси патне илсе пынă тата, çапла майпа, боļшевикла пропагандăн сарăмлăхне ансăрлатасси патне, кустарничĕства тата организацисĕрлĕх патне илсе пынă.

Партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕсем, хăйсен ĕçне сăмахлă пропагандăпа чарса, кружоксен хисепĕ хыççăн хăваласа, пропагандă ĕçĕнче парти пичечĕпе усă курман, тата çакна пула хăйсем пропагандăна чăннипех йертсе пымали майсăр тăрса йулнă.

Хăй черечĕпе пичет пайĕсем, пропагандиссен квалификацилĕ кирлĕ кадрĕсемсĕр тăрса йулнăскерсем,—вăл кадрсем пĕтĕмĕшпе пекех сăмах вĕççĕн пропагандăлас ĕçе кайнă, — марксисăм-ленинисăма пичет урлă пропагандăлама пултарайман.

3) Партилĕ пропагандă ĕçĕнчи пит пысăк çитменлĕх—парти организацисем хамăрăн кадрсене, хамăрăн совет интеллигенцийĕ,—парти, комсомол, совет, хуçалăх, кооперации, суту-илÿ, профсойуз, йалхуçалăх, çутта кăларас ĕç, çар ĕç кадрĕсене, урăхла каласан, парти, государствă тата колхоз аппарачĕсен кадрĕсене,—çав кадрсем пулăшнипе рабочи клас тата хресченсем Совет çĕршывне тытса тăраççĕ,—политика тĕлĕшпе хатĕрлес ĕç çине, марксисла-ленинла пиçĕхтерес ĕç çине йĕрĕнсе пăхни пулать. Пирĕн партилĕ пропагандăн практики, пуринчĕн ытла станок умĕнчи рабочисене хутшăнтарасси çине тимлĕх хурса пирĕн йертсе пыракан кадрсене—ĕнерхи рабочисемпе хресченсенчен тăракан пирĕн совет интеллигенцине, партири тата партире мар интеллигенцине айакка тăратса хăварнă.

„ПСК(б)П Истории Кĕске курсĕ“ пирĕн, совет интеллигенцийĕ çине тата ăна политикăлă, ленинла воспитани парас ĕç çине çакăн пек тискеррĕн, Ленина хирĕçле, йĕрĕнсе пăхнине пĕтерессине хăйĕн задачисенчен пĕрин вырăнне лартать.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ“, чи малтан, парти, комсомол, хуçалăх тата ытти работниксен йертсе пыракан кадрĕсем, пирĕн партири тата партире мар хуларипе йалти пĕтĕм интеллигенци ваļļи кăларнă.

Пирĕн партилĕ, советлă, хуçалăхлă тата ытти ĕçсенчи йертсе пыракан ленинла кадрсем, практикăлă ĕçре ĕçлекенскерсем, теори тĕлĕшĕнчен пит те кайа йулнă. Парти историн курсне туса хатĕрлесе, ПСК(б)П Тĕпкомĕ пирĕн кадрсем теори тата политикă тĕлĕшĕнчен çакăн пек кайа йулнине пĕтерме пуçлас задачă лартнă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ çакна асра тытнă: „..пирĕн парти кадрĕсене, айалтан пуçласа çÿле çитиччен, вĕсене государствăн шалти тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăруне çăмăллăнах чухлама пултарас таран идеологи тĕлĕшĕнчен хатĕрлеме тата политика тĕлĕшĕнчен пиçĕхтерме пултарсан, епĕр вĕсене çĕршыва йертсе пырас ыйтусене пысăк йанăшсем тумасăр татса пама пултаракан пĕтĕмĕшпех пиçсе çитнĕ ленинĕцсем, марксиссем тума пултарсан, епĕр çакна тума пĕлсен, вара епĕр пирĕн мĕнпур задачăсен вунă пайĕнчен тăхăр пайне татса панă пулăттăмăр“ (Сталин).

ПСК(б)П Тĕпкомĕ çакна асра тытнă: боļшевикла йертсе пырассин искусстви теорине, урăхла каласан, обшĕствă аталанăвĕн саккунĕсене, рабочисен йухăмĕн аталанăвĕн пролетарилĕ революци аталанăвĕн, социалисăм строитĕлстви аталанăвĕн саккунĕсене пĕлме тата вăл саккунсемпе социалисăм строитĕлствине йертсе пырас практикăлă ĕçре усă курма пĕлме хушать.

Пирĕн пĕтĕм кадрсем совет интеллигенцин пит пысăк çарĕ пулса тăраççĕ. Совет интеллигенцийĕ хăйĕн пĕтĕм тымарĕсемпе рабочи класпа тата хресченсемпе çыхăнса тăрать. Ку вăл пачах çĕнĕ интеллигенци, ун йеврли тĕнчери пĕр çĕршывра та çук.

Пĕр государствă та хăйĕн интеллигенцийĕсĕр пурăнма пултарайман тата пултараймасть те, рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви пушшех те хăйĕн интеллигенцийĕсĕр пурăнма пултараймасть. Совет влаçĕн çулĕсенче ÿссе çитĕннĕ пирĕн интеллигенци государствă аппарачĕн кадрĕсенчен тăрать, вĕсем пулăшнипе рабочи клас хăйĕн шалти тата тулти политикине тытса пырать. Вĕсем—ĕнерхи рабочисемпе хресченсем тата рабочисемпе хресченсен ывăлĕсем, йертсе пыракан вырăнсене çĕкленнĕскерсем. Пирĕн çĕршыв пек çĕршывра, государствă хуçалăхпа куļтурăн пур отраслисене те, вăл шутрах йалхуçалăхне те, йертсе пыракан çĕршывра, тата хăйĕн ĕçне ăнланулăн, ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырас тесе кашни работник государствă политикине, унăн çĕршыв ăшĕнчи тата тулашĕнчи задачисене пĕлсе тăма тивĕçлĕ çĕршывра интеллигенци уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Çапла ĕнтĕ, совет интеллигенцине марксисла-ленинла воспитани парасси боļшевиксен партин чи малтан тумали тата чи кирлĕ задачисенчен пири пулса тăрать.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ çакна паллă тăвать: совет государствинче интеллигенцин ролĕ çавтери пысăк пулнине пăхмасăр, хамăр интеллигенци çине йĕрĕнсе пăхассине халиччен те пĕтермен-ха, пирĕн совет интеллигенцийĕ çине çавăн пек пăхни революцичченхи пурнăçран куçарнă сийенлĕ йапала, интеллигенци çине çавăн пек йĕрĕнсе пăхни революцичченхи тапхăрта саралнă пулнă, ун чухне интеллигенци помешчиксемпе капиталиссем патĕнче службăра тăнă.

Интеллигенци çине çакăн пек йĕрĕнсе пăхни—кадрсем хушшинчи идейăла-воспитани ĕçне йапăхтарса йанинче, интеллигенци, служăшчисем, учитĕлсем, врачсем, студентсем, колхоз интеллигенцийĕ т. ыт. хушшинче политикăлă ĕçе пăрахнинче, партире тăракан тата партире тăман интеллигенци çине, хăйĕн тава тивĕçлĕ ĕçĕсене пула совет государствин йертсе пыракан постине ĕçлеме лартнă çын çине, вăл ĕнерхи стаханăвĕц пулсан та, иккĕмĕш сортри çын вырăнне хурса, ун çине йĕрĕнсе çиелтен пăхнинче курăнать.

Совет интеллигенцийĕ çине çакăн пек боļшевисăма хирĕçле пăхни тискер, хулиганла тата совет государствишĕн хăрушă ĕç пулать. Ăнлама кирлĕ: шăпах та интеллигенци хушшинчи, хамăрăн кадрсем хушшинчи политикăлă ĕçе йапăхтарни ĕнтĕ, партин политикăлă влийани тулашĕнче пулса тăнă тата идейăла пиçĕхÿсĕр йулнă пирĕн кадрсенчен пĕр пайне политика йенĕпе пăрăнса, аташса кайасси патне, йутçĕршыв разведкисемпе вĕсен троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агентурин аллине кĕрсе ÿкесси патне илсе пынă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ, интеллигенци çине çакнашкал „махайевла“, Ленина хирĕçле пăхассине пĕтерме кирлĕ тесе шутлать.

Совет интеллигенцине марксисăм-ленинисăм тăрăх воспитани пани кирлĕ.

Çакăн пек интеллигенцисĕр совет государстви çĕршыва ăнăçлăн йертсе пыма пултараймасть.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ“ совет интеллигенцине çакăн пек воспитани памали средствă пулса тăрать.

III.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ **йышăнать:**

1. Пропагандă пахалăхне сийен кÿрсе коммуниссене парти вĕрентĕвĕн кружокĕсене хисеп йенчен хутшăнтарасси хыççăн хăваланă, вăйсене салатса пĕтересси тата пропагандă ĕçне вăйсăрлатасси патне илсе пыракан практикăна тĕрĕс мар тесе шутлас.

2. Парти организацисене парти пропаганди ĕçĕнчи организацилĕ кустарничĕствăна пĕтерме, ăна йертсе пырассинче кирлĕ пек централизаци тума тата парти пропагандин организацине—унăн пахалăхне, унăн идейăлă çÿлĕшне хăпартмала тăвас йенчен çĕнетсе тухма хушас.

3. Марксисăм-ленинисăм пропагандин никĕсне „Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (боļшевиксен) Парти Историйĕн Кĕске курсне“ хурас.

ПСК(б)П историне вĕренессине çакăн пек дифференциацилемеле:

Кадрсен **кĕçĕн** сыпăкĕшĕн,—вĕсен хисепĕнче çителĕклĕ хатĕрленеймен йулташсем чылай, — курса кĕскетнĕ обйомпа парти историйĕн виçĕ тĕп етапĕ тăрăх: 1) боļшевиксен партине тăвассишĕн кĕрешни (1—4-мĕш сыпăксем), 2) боļшевиксен партийĕ пролетариат диктатуришĕн кĕрешни (5—7-мĕш сыпăксем), 3) боļшевиксен партийĕ влаçра тăни (8—12-ш сыпăксем) тăрăх вĕренни вырăнлă.

Вăтам сыпăкшăн, — вăл ытларах хатĕрленнĕ тата пирĕн кадрсен ытларах нумай йышлă сыпăкĕ пулать, — ПСК(б)П Тĕпкомĕ, „ПСК(б)П Историйĕн Курсне“ пĕтĕмĕшпех, унти 12 сыпăк тăрăх, вĕренме сĕнет.

Çÿлти сыпăкшăн, урăхла каласан—ытларах хатĕрленсе çитнĕ йулташсемшĕн, „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“, кашни сыпăкăн уйрăм пайĕсем тăрăх вĕренни вырăнлă, пĕр вăхăтрах Маркс—Енгеļс—Ленин—Сталин çырнă тивĕçлĕ произведенисене первоисточниксем тăрăх вĕренсе пымала.

4. Марксисăм-ленинисăма вĕренессинче тĕп меслет—харпăрхăй тĕллĕн вĕренесси пулнине хисепе илсе, обкомсене, крайкомсене, нацилĕ компартисен Тĕпкомĕсене парти вĕренĕвĕн кружокĕсен хисепне чакарма хушас.

Халĕ кашни пысăк предприйатире, учрежденире, аслă шкулсенче ĕçлекен вуншар, хăш чухне тата çĕршер кружоксем вырăнне, ĕç патне тĕрĕс пырса пăхсан, пысăк предприйатире, пысăк учрежденире кĕçĕн кадрсем ваļļи, тĕслĕхрен, 2—3 кружок, вăтам хисеприсем 2—3 кружок тата нумайрах пĕлекен, хатĕрленсе çитнĕ çынсем ваļļи пĕр аслă кружок; аслă шкулсенче—темиçе вăтам тата аслă кружоксем тусан вырăнлă пулни курăнĕ.

Йал районĕсенче „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ кружоксенче вĕренес текенсем пур пулсан тата квалификацилĕ пропагандиссем пур пулсан, йалти интеллигенци ваļļи: партипе совет активĕ ваļļи, учитĕлсем, сутуилÿпе кооперации работникĕсем, колхоз активĕ т. ыт. ваļļи темиçе кружок тума йурать.

Кружоксен хисепне чакарнă чухне, кружоксене чăннипех квалификацилĕ пропагандиссем памала тăвас задача хисепе илни кирлĕ.

5. Коммуниссене парти вĕрентĕвĕн кружокĕсене ирĕксĕрлесе хутшăнтарас административлă-бÿрократла практикăна пĕтермеле.

Кашни коммунисах çакăн çинчен ăнлантарса парас: кружока хутшăнасси кашнишĕн хăй ирĕкĕпе çеç тумали ĕç пулать.

6. Кружок ĕçне чĕрĕ калаçусен тата йулташла дискуççи никĕсĕ çинче туса пымала. Кружоксенчен партире тăракан тата партире тăман боļшевиксене идейăлă воспитани парассине чăрмантарса тăракан, сийенлĕ, шкоļарла-административлă меслетсене, казенчичинăна, схематисăма татăклăн хăваласа кăларас пулать. Пропагандиссен кружок членĕсем интересленекен ыйтусем тăрăх йулташла ăнлантару памала.

Кружоксен ĕçĕсене формаļлă-бÿрократла регламентацилессине (парти вĕренĕвĕн пĕрлĕх кунĕ, ĕç пĕтнĕ хыççăн сийĕнчех икĕ сехетлĕх заняатисем туса ирттересси, кружокра вĕренекенсем интересленекен практикăлă ыйтусене лартма килĕшменни т. ыт.) пĕтерес пулать. Кашни кружок заняати расписанине, унта вĕренекенсен, пропагандиспа пĕрле, вырăнти условисене хисепе илсе, тумала. Кашни заняати, кружокра вĕренекенсем, лартнă ыйтусене тĕплĕн сÿтсе-йавма мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ тесе шутлаççĕ, çавăн чухлĕ вăхăта пымала.

Кружоксен ĕçне—заняатисене ытлашши нумай тапхăра пыракан вăхăта чăсса йамала мар туса организацилес пулать. Хаļхи кружоксен ĕçĕнчи пĕр тĕп çитменлĕхе тăвасран сыхланни кирлĕ, вăл çитменлĕх—пирвайхи темăсем ваļļи виçесĕр нумай вăхăт парса, парти историнче пахаран та паха вырăн йышăнса тăракан Октăбер хыççăнхи тапхăра вĕренмесĕрех хăварни пулать.

Парти историне вĕренмели кружоксене çакăн пек йĕркелес пулать: унта вĕренекенсен общеобразовательнăй пĕлĕвĕ тата политикăлă хатĕрленĕвĕ пĕр виçелĕрех пулмала. Вĕренекенсен пĕлĕвĕ мĕнле пулнине кура, „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ дифференцацилĕ характер тăрăх вĕренме кружоксем виçĕ тĕрлĕ пулмала:

а) пирĕн кадрсен кĕçĕн сыпăкĕ ваļļи тунă кружоксем,—кунта „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ кĕскетнĕ обйомпа, теори ыйтăвĕсене ытларах ăнланмала пултармала каласа панипе вĕренеççĕ;

б) вăтам сыпăк ваļļи тунă кружоксем—„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне“ пĕтĕмĕшпе уйрăм сыпăксем тăрăх вĕренеççĕ;

в) ытларах хатĕрленнĕ йулташсем ваļļи тунă кружоксем—кунта „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ кашни сыпăкăн уйрăм пайĕсем тăрăх, пĕр вăхăтрах первоисточниксем тăрăх вуласа вĕренеççĕ.

7. Практикăна лекцисем тăвас йĕрке кĕртес, вĕсем марксисăм-ленинисăм пропагандинче паха меслет пулса тăраççĕ. Лайăх хатĕрленнĕ, содержанилĕ лекци „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ тата марксисăм-ленинисăм классикĕсен произведенийĕсене харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен йулташсем ваļļи пысăк пулăшу пулса тăмала. Лекцисем, çавăн пекех тата, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх тата теорипе политикăлă уйрăм ыйтусем тăрăх пулмала. Лекци хыççăн панă ыйтусене лектăр ответлесси вырăнлă пулать тесе шутлас. Пăртакках укçа тÿлесе çÿремеле уçă лекцисем организацилессине практикăна кĕртмеле.

8. Пропагандиссемпе ĕçлессинчи кустарщчинăна тата контроļсĕрлĕхе пĕтермеле, вĕсем парткабинетсемпе пропагандиссен семинарĕсем ниме пăхмасăр лартса тултарасси хыççăн хăваланинче палăрнă. Парторганизацисене икĕ уйăх хушши срукра парткабинетсен хисепне тĕрĕслесе пăхса тухма хушас, вĕсен хисепне чакармала, парткабинетсене политикăна хăйсем тĕллĕн вĕренекен пропагандиссене пулăшма тата консуļтаци пама, правилă пекех, хула комитечĕсемпе парти райкомĕсем çумĕнче хăвармала. Предприйатисемпе учрежденисенчи квалификацилĕ консуļтантсем çук парти кабинечĕсене сахаллатмала, йе вĕсене харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсем ваļļи вулав пÿлĕмĕсемпе библиотекăсем туса усă курмала. Парторганизацисене пропагандиссен семинарĕсен хисепне сахаллатма хушас, пропагандиссен семинарĕсен ĕçĕсене хуласенчи пысăк ПСК(б)П райкомсем çумĕнче, хула комитечĕсем, обкомсем, крайкомсем çумĕнче пĕтĕçтерсе тăмала.

Парти организацисен пропагандиссен семинарĕсене тунă чухне, вĕсене марксисла пысăк вĕреннĕ, политика йенчен тĕрĕсленнĕ руководитĕлсем памала тăвас пулать. ПСК(б)П хула комитечĕсен, обкомсен тата крайкомсен пропагандиссен семинарĕсен ĕçĕн содержанине тăтăшах контроļ туса пымала.

ПСК(б)П истори тăрăх ĕçлекен пропагандиссен семинарĕсен ĕçне ПСК(б)П историне вĕренмели виçĕ тĕп формăна килĕшÿлĕн тумала, çав вăхăтрах тата „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ вĕреннĕ чухне пропагандиссен семинарĕсем кружоксенчен чылай малтан пулса пымала.

Семинар пропагандиссене „накачивание“ тумали вырăн пулмала мар. Пропагандиссен семинарĕсенче заняатисене çакăн пек туса пымала: унта семинара çÿрекен кашни çын ваļļи творчĕствăлă ĕçлеме, теорилĕ ыйтусене чĕррĕн сÿтсе-йавма, теори тата методикă ыйтăвĕсем тăрăх йулташла дискуççи тума май пулмала.

9. ПСК(б)П Тĕпкомĕн пропагандăпа агитаци пайне—пирĕн партин ытларах квалификацилĕ пропагандисĕсене, лектăрсене, докладчиксене, консуļтантсене пĕрле шгерме хушас, вĕсен теорилĕ журналсенче, тĕпри хаçатсенче хутшăнса ĕçлемеле, вырăнсенче лекцисем, докладсем тумала, вырăнсенчи парти организацисене, марксисăм-ленинисăм пропагандинче витĕмлĕ пулăшу памала.

Лайăх пропагандиссен, вĕсен заняатийĕсен, консуļтацисен, лекцисен опычĕсене пухса, вĕсене тăтăшах пичет страницисем çинче çутатса пыма кирлĕ тесе шутлас.

Хула комитечĕсене, обкомсене, крайкомсене тата нацилĕ компартисен Тĕпкомĕсене пропагандăн тĕп ыйтăвĕсене сÿтсе-йавма тăтăшах пропагандиссемпе пичет работникĕсене пухмала тума сĕнес.

10. Пичет марксисăм-ленинисăмăн пахаран та паха орудийĕ тата пропагандăн пĕтĕм Сойузри трибунĕ пулнине хакламасăр тăнине пĕтерес.

Марксисăм-ленинисăма пропагандăлас ĕçре пичет роļне хăпартас. Çак тĕллевпе „Правда“, „Красная Звезда“, „Комсомольская Правда“ редакцисене, çавăн пекех республикăсенчи, крайсенчи, облаçсенчи парти тата комсомол хаçачĕсене хăйсен страницисенче марксисăм-ленинисăмăн теорилĕ ыйтăвĕсем тăрăх статйасем, консуļтацисем, лайăх пропагандиссен лекцисене, вулакансем панă „ыйтусене“ панă „ответсем“ пичетлесе пыма хушас. „Правда“, „Красная Звезда“, „Комсомольская Правда“ редакцисен, çавăн пекех республикăсенчи, крайсенчи, облаçсенчи партипе комсомол хаçачĕсен редакцисен составĕнче пропагандă пайĕсем организацилес, вĕсен пуçне теори йенчен хатĕрленнĕ йулташсене лартмала, тата редакцисен пропагандă пайĕсенче ĕçлеме чи лайăх пропагандиссене хутшăнтармала.

„Большевик“ журнала урăхлатса çĕнетмеле тесе шутлас, унăн партин теорилĕ органĕ тата марксисăм-ленинисăм ыйтăвĕсем тăрăх пĕтĕм Сойузри консуļтаци пулмала, хăйĕн страницисенче парти членĕсемпе партире тăманнисем интересленекен теорилĕ тата практикăлă ыйтусем тăрăх ответсемпе ăнлантарусем памала.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн пропагандăпа агитаци пайне тата Госполитиздата пропагандиссене тата уйрăмăнах—парти историне вĕренекен кĕçĕн актива пулăшма, попуļарнăй брошÿрăсем кăлармала тума, çавăн пекех тата парти историйĕ тăрăх пособисем кăлармали план хатĕрлеме хушас.

11. Совет интеллигенцийĕ çине тата ăна марксисăм-ленинисăм тăрăх идейăлă воспитани парас ĕç çине йĕрĕнсе пăхнине тискерле, хулиганла ĕç тесе сивлес. Парти организацисене совет интеллигенцийĕ çине боļшевикла тĕрĕс пăхас йĕркене кайала таврăрса, интеллигенци хушшинче, служăшчисем, студентсем, колхоз интеллигенцийĕ хушшинче идейăла-политикăлă ĕçе вăйлатса йама хушас. Парти организацисен пропагандă йенĕпе тăракан пирвайхи черетри тата тĕп задачĕ тесе—партире тăракан тата партире тăман интеллигенци теорипе политика тĕлĕшĕнчен кайа йулнине пĕтерессн пулать тесе шутлас, совет интеллигенцине боļшевисăма вĕренсе алла илес, ПСК(б)П историне тата марксисăм-ленинисăм классикĕсен произведенисене вĕренес ĕçре пур майсемпе те пулăшса пымала.

12. Теори фронтĕнчи работниксем хытах та кайа йулнине палăртас, в сем кайа йулни—вĕсем теорире вăйсăр пулнинче, вĕсем актуаļнăй теорилĕ ыйтусене хăйулăн лартма хăранинче, начетчичĕствăпа буквойедствă сарнинче, марксисăм-ленинисăмăн уйрăм положенисене вуļгаризацилениниче, пăсса пĕтернинче, теорилĕ шухăш кайа йулса пынинче, парти социалисăм строитĕлствин пур участкисенче те тунă практикăлă питĕ пысăк опытсене теори йенчен пĕтĕçтерессн çителĕклĕ марринче палăрать. Теори фронтĕнчи пĕтĕм работниксене марксисла-ленинла теорине малала йарас пыракан теорилĕ ыйтусене хăйуллăн лартма хăраса тăнине пĕтерсе, буквойедствăна, начетчичĕствăна, схоластикăна, марксисла-ленинла теорин уйрăм положенисене вуļгаризацилесе, пăсса пĕтернисене пĕтерсе, теори фронтĕ чăтма çук кайа йулса пынине татăклăн тата хăвăрттăн тÿрлетсе йама чĕнес.

13. Идеологи хуçалăхĕ йапăхса кайнине пĕтермеле, вăл çапла пулни, уйрăмăн илсен, Маркс—Енгеļс—Ленин институчĕ çителĕксĕр ĕçленинче курăнать, институт Маркспа Енгеļс сочиненисене вырăсла чĕлхе çине куçарнă чухне чылай пăснисемпе тĕрĕсмарлăхсем туса пĕтернĕ, çавăн пекех тата Ленин сочиненисен хăшпĕр томĕсем çумне хушса кăларнисенче, асăрхаттарнисенче, комментарисенче сăтăрçăла йышши политикăлă пысăк йанăшсем туса пĕтернĕ.

14. Маркс—Енгеļс—Ленин институтне кĕске вăхăтра Маркс—Енгеļс сочиненисене вырăс чĕлхи çине куçарнă чухне пăсса пĕтернĕ вырăнсене, çавăн пекех В. И. Ленинăн сочиненисенче, сăмахран, XIII-мĕш том çумне хушса кăларнисемпе асăрхаттарнисенче тунă политикăлă пысăк йанăшсене тÿрлетме хушас.

Маркс—Енгеļс—Ленин институтне Маркс—Енгеļс тата В. И. Ленин сочиненисене тепĕр хут кăларассине васкатма хушас.

15. Пирĕн теорилĕ журналсем пирĕн парти пурнăçĕпе кĕрешĕвĕнчи кирлĕрен те кирлĕ ыйтусенчен уйăралса кайнине, вĕсем хăйсен ăшăнче хупăнса ларнине тата академисăм йенне туртăннине палăртас.

Теорилĕ журнал редакцийĕсене хăйсен ĕçĕсене çĕнĕле улăштарса тухма хушас, вĕсен хăйсен страницисенче актуаļнăй теорилĕ ыйтусем лартмала, социалисăм строитĕлствин опытне пĕтĕçтермеле, пирĕн кадрсене теорилĕ ыйтусенче пулăшмала, теорилĕ çĕнĕ ыйтусем уçса татмала, теори ыйтăвĕсем тăрăх творчĕствăлă дискуççисем ирттермеле тăвас пулать.

16. ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраļ-мартри пленумĕ партин йертсе пыракан кадрсене политика йенчен тепĕр хут хатĕрлеме палăртса хунă системă çумне хушса, партин квалификацилĕ пропагандиссен кадрĕсене тепĕр хут хатĕрлес тата çĕнĕрен хатĕрлес тĕлĕшпе çакăн пек ĕçсем туса ирттермеле:

а) пропагандиссемпе хаçат работникĕсене тепĕр хут вĕрентсе хатĕрлеме çак центрсенче: 1) Мускавра, 2) Ленинградра, 3) Кийĕвра, 4) Минскра, 5) Ростовра, 6) Тбилисире, 7) Бакура, 8) Ташкентра, 9) Алма-Атара, 10) Новосибирскра çултаlăклăх курссем организацилес. Çак центрсенче организациленĕ çултаlăклăх курссем çак облаçсемшĕн, крайсемшĕн кăна мар, тата йунашар облаçсемшĕн, крайсемшĕн, республикăсемшĕн те пулмала. Пропогандиссен çултаlăклăх курс программисем „Ленински курссен“ программине майлă пулмала, заняатисем пропогандисла ĕçĕн тата Маркспа Енгеļс, Ленинпа Сталин произведенисене харпăрхăй тĕллĕн таранăн вĕренессин ханăхăвне ÿстерсе пымала.

Пропагандиссене тепĕр хут вĕрентсе хатĕрлемели çултаlăклăх курссенче вĕренекенсен пĕтĕмĕш контингентне 1500—2000 çын тăвас, çак составра çуррине йахăн хаçат работникĕсем пулмала.

б) ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнче, партин пысăк квалификацилĕ теорилĕ кадрĕсене хатĕрлеме, марксисăм-ленинисăмăн Аслă шкулне организацилес, унта виçĕ çул вĕрентмеле тăвас.

17. Аслă шкулсенче марксисăм-ленинисăм теорине вĕрентессине „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ таранăн вĕреннĕ никĕс çинче тумала. Çакна май:

а) хăйсене уйрăм пулнă ленинисăм, диалектикăлă тата историлĕ материалисăм курсĕсем вырăнне, аслă шкулсенче „Марксисăм-ленинисăм никĕсĕсем“ çинчен вĕрентекен пĕрлĕхлĕ курс тăвас, вĕренÿ планĕнче ку таранччен социаļнăй-економически дисциплинсем ваļļи уйăрса пана сехетсен пĕтĕмĕш хисепне çаплипех хăварас. Аслă шкулсенче марксисăм-ленинисăм теорин никĕсĕсене вĕрентесси „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ вĕренессинчен пуçланмала, пĕр вăхăтрах марксисăм-ленинисăм первоисточникĕсене вĕренсе пымала. Политикăлă економине вĕрентесси „ПСК(б)П Историне“ вĕрентнĕ хыççăн пулса пымала.

б) Аслă шкулсенче хаļхи вăхăтра пур диалектикăлă тата историлĕ метарналисăмăн, ленинисăмăн тата ПСК(б)П историн уйрăм кафедрисем вырăнне, марксисăм-ле-

Йулашки 3-мĕш страницăра

Нимĕç оккупанчĕсене Украинăран хăваласа кăларни 20 çул тултарчĕ

1917 çул вĕçĕнче Тĕп рада—Украинăри есерсемпе меньшевиксен керенщчина вăхатĕнче Кийĕвра тунă контрреволюцилĕ организацийĕ—Совет влаçне хирĕç пăлхав пуçланă. Центральнăй радăри пуçлăхсем, Совет влаçне хирĕç кĕрешме патша генералĕсемпе—Калединпа тата Корнилăвпа килĕшнĕскерсем, нацилĕ курайманлăха чĕртсе пынă, тăван Украинă тата вырăс халăхĕсем хушшинче хирĕçÿ кăларма хăтланнă.

Пăлхава аркатса тăкнă. Большевиксен парти йертсе пынипе Украинă ĕççыннисем Совет влаçĕшĕн Совет Роççийĕнчи ĕççыннисемпе пĕрле кĕрешнĕ.

1917 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, Украинă ĕççыннисенчен илнĕ нумай çырусем çине Сталин йулташ çапла ответ панă: „Украинăпа вырăс халăхĕсем хушшинче хирĕçÿ çук, пулма та пултараймасть. Украинă тата вырăс халăхĕсем, Роççийăри ытти халăхсем пекех, рабочисемпе хресченсенчен, салтаксемпе матроссенчен тăраççĕ. Вĕсем пурте пĕрле патша йĕркине хирĕç, керенщчинăна хирĕç, помещиксемпе капиталиссене хирĕç, вăрçăна тата империалисăма хирĕç кĕрешнĕ. Вĕсем пурте пĕрле çĕршĕн, миршĕн, ирĕклĕхшĕн тата социалисăмшăн йун йухтарнă“.

Украинăри Совет правитĕлствине пулăшма Мускавран тата Петроградран Хĕрлĕ гварди чаçĕсене йанă. Харькăва Орджоникидзе йулташ пынă, ăна парти Тĕпкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ чрезвычайлă полномочи панă.

Украинă тата вырăс хĕрлĕгвардеецисен пĕрлешÿлĕ вăйĕсем Центральнăй радăн шургвардилĕ çарĕсене хăвăрт çĕмĕрсе тăкнă.

Украинă шургвардеецсен тылĕнче Кийĕври, Винницăри, Одессăри, Николайĕври, Жмеринкăри рабочисем восстани тунă. 1918 çулти февралĕн пуçламĕшĕ тĕлне Украинăн пĕтĕм территорийĕнче тенĕ пекех Совет влаçĕ туса хунă. Украинăри Совет правитĕлстви Харькăвран Кийĕва куçнă. Центральнăй радă хăйĕн çарĕн йулашкисемпе темиçе грузовик çине тийенсе Житомира тарнă. Вăл унта çитсенех тахçантанпа Украинă пуйанлăхне туртса илме хапсăнса пурăннă нимĕç империалисĕсенчен пулăшу ыйтнă. Февралĕн 9-мĕшĕнче шургвардилĕ радăн делегаци тенĕскер Брест-Литовскра Германипе тата унăн сойузникĕсемпе догăвăр туса ала пуснă. Çак предатĕлле догăвăр тата ун çумне хунă вăрттăн килĕшÿсен протоколĕсем Украинăна нимĕçсен колонийĕ туса хунă. Вăрçăлă килĕшÿ çинчен тунă протокол çапла вĕçленет: „Вăрçăра пулăшу пама ыйтни пурнăçа кĕрет“. Çакăн хыççăн нимĕç войенщчинине çав вăхăтра Брест-Литовск хулинче Совет делегацине пынă калаçăва татса парахма сăлтав çеç кирлĕ пулнă. Çав сăлтава вĕсене предатĕл Троцкий панă. Вăл бухаринĕçсемпе тата „сулахай есерсемпе“ пĕр загăварта тăрса, çамрăк, тĕрекленсе çитмен совет çĕршывне вăйлă хĕçпăшалланнă империалиссемпе вăрçа кĕртсе йарса, нимĕç штыкĕсем пулăшнипе пролетари диктатурине çĕмĕрсе тăкма тата социалисăм ĕçне пĕтерсе хума хăтланнă. Февралĕн 10-мĕшĕнче Брест-Литовскра Троцкий хăйне провокацилĕ тытни, Ленинпа Сталин директивне пăсса мирлĕ догăвăр çине ал пусма килĕшменни нимĕçсен аллине вĕçертсе йанă.

Хăйĕн çарне демобилизациленĕ Совет çĕршывне хирĕç çар йарса, нимĕç империалисĕсем Совет правитĕлствин умне çĕнĕ тата йăвăртарах условисем кăларса тăратнă, Украинăри Совет влаçне йышăнма килĕшмен.

Совет правитĕлствин ирĕксĕрех çав условисене йышăнма тивнĕ. Социалисăмлă револьуцире кĕрешсе илнисене çăлса хăвармали урăх май пулман. Унчухне кивĕ çар текех ĕнтĕ пулман, револьуцилĕ отрйадсем сахал тата вăйсăр пулнă. Петроград, Кийĕв тата Одесса патне хăвăрт пыракан хайар тăшмана чарма вăй çитеймен.

Нимĕç империалисĕсем 29 пехота дивизипе, 3 кавалери дивизипе Украинăна пырса кĕнĕ. Вĕсемпе пĕрле помещиксем, фабрикантсем, полицейскисем кайала таврăннă.

Большевиксен парти чĕннипе Украинăри рабочисемпе хресченсем тăван çĕршыва тата Совет влаçне сыхлама кĕрешĕве тухнă. Ворошилăв йулташ Петроградран Украинăна таврăннă. Вăл Донбасра отрйадсем организацилеме тытăнса, мартăн 5-мĕшĕнче рабочисене çапла чĕнсе каланă: „Хăрушă сехет çитрĕ. Пурте пĕр çын йулмиччен хĕçпăшал тытăр!“ Темиçе кун иртсен, Климент Йефремович Донбасри малта пыракан рабочисен отрйадне йертсе пырса Луганскран тухса кайнă.

Ворошилăв йулташ йертсе пынипе металлиссемпе шахтăрсем захватчиксен бандисем тапăннине паттăрран сирсе пынă. Малта пыракан пролетарисем хăйсен паттăрлăхĕпе, тăшмана хирĕç пĕтĕм вăйа хурса кĕрешнипе халăха захватчиксене хирĕç кĕрешме хавхалантарнă. Пролетарилĕ Донбас примерĕ тăрăх отрйадсем организацилесси пĕтĕм Украинă тăрăх саралса кайнă. Черниговщинăра партизансен пĕр отрйадне пăравус машинисĕн ывăлĕ, прапорщик пулнă Николай Шчорс йертсе пыма тытăннă, Шчорс оккупантсене хирĕç пынă çапăçура часах йумахри пек мухтава тухнă.

Нумай хуласенче отрйадсене кĕме ĕлкĕреймен рабочисем нимĕçсем çывхарса çитнĕ чухне мĕн алла кĕчĕ çавăнпа хĕçпăшалланнă, захватчиксене хирĕç вăйлăн кĕрешнĕ. Херсонра кашни урамрах оккупантсене пăшалпа, пулеметпа, револьвĕрпе пенĕ. Чÿречесенчен гранатăсемпе, чулсемпе, кирпĕчсемпе пенĕ. Николайĕвра оккупацин иккĕмĕш кунĕнче восстани пуçланса кайнă. Нимĕçсем артиллери пулăшнипе çеç восстанине пусарма пултарнă, вĕсем рабочисен кварталĕсем çине тупăсемпе пенĕ, вуншар çурта йалтах ишĕлтерсе антарнă.

„Хĕвеланăçĕнчен килекен йутçĕршыв пусмăрне хирĕç, совет Украини ирĕке тухмали отечественнăй вăрçа çĕклет,—Украинăра саралса пыракан событисен шухăшĕ çапла“, тесе çырнă Сталин йулташ çав кунсенче.

Украинăна кĕрсе пырса, нимĕçсем кунта вăйлăн хирĕç тăнипе тĕл пуласса кĕтмен. Вĕсем хытă йанăшнă. Совет çарĕсем сахал, отрйадсем сапаланчăк пулнă пулин те, выранти халăх пулăшнипе вĕсем тăван çĕршĕн паттăррăн кĕрешнĕ. Нимĕç оккупанчĕсене Донбасра уйрăмах хытă хирĕç тăнă. Унта К. Й. Ворошилăв йулташ тăшмансем тапăннине сирсе пырса, сапаланчăк отрйадсене хăй йертсе пынипе майĕпенех пĕрлештерсе пынă. Радакова станци патĕнче Ворошилăв йертсе пынипе пĕрлешнĕ отрйадсем нимĕç çарĕн икĕ дивизине хирĕç çапăçнă, питĕ чаплă контратака туса тăшмана сирсе ывăтнă, ăна кайала чакарнă. Анчах та çапăçура вăйсем питех те тан пулман.

Апрел уйăхĕн вĕçнеле, икĕ уйăх хушши çапăçнă хыççăн, Германипе Австри çарĕсем, салтакĕсене нумай суранлатса тата вĕлерсе пĕтерсе, хĕçпăшалĕсене нумай сухатса, Украинăна, Крыма тата Дон облаçĕн пайне тытса илнĕ. Захватчиксем Брестри мир условине пăснă, вĕсем малала хĕвелтухăçне кăнтăрала кĕрсе кайма хăтланнă, анчах вĕсен çавна пурнăçа кĕртме май килмен. Хĕвелтухăçнеле, Белайа Калитваран малала вĕсене Ворошилăв йулташ отрйачĕсем йаман, ку вăхăт тĕлне унăн отрйачĕсем хăватлă çар пулса тăнă. Оккупантсем малала кайассине хĕрлĕ отрйадсем Батайск патĕнче чарса лартнă.

Украина çавăрса илсен оккупантсем пăхăнман халăха тискеррĕн, йун йухтарса пусарма тытăннă. Йекатеринославра темиçе çĕр рабочие вокзал стени çумне тăратса тухнă та, пулеметран персе вĕлернĕ. Персе вĕлерсен ÿчĕсене грузовик çине тийесе çынсене хăратма хула тăрăх турттарса çÿренĕ. Черниговщинăри Добрйанка йалĕнче вĕлерме, асаплантарма тытса илнĕ хресченсене нимĕç кавалерисĕсем хăйсен лаши хÿрисем çумне çыхса сĕтĕрсе çÿренĕ. Тискерленсе кайнă нимĕç оккупанчĕсем кашни нимĕç салтакне вĕлернĕшĕн выранти çынсене вуншар çын вĕлернĕ, оккупантсене хирĕç агитациленĕшĕн, 24 сехет хушшинче хĕçпăшал паманшăн персе вĕлернĕ, персе пăрахассипе хăратса 5 çынтан ытла пухăнма чарнă.

Çĕршыва тата халăха нимĕн чарусăр çаратасси пуçланса кайнă. Нимĕçсемпе догăвăр тунă тăрăх Центральнăй радă Германипе Австрине продовольстви тата чĕрĕ тавар тăратма пулнă. Пилĕк уйăх хушшинче Украинăн çав çĕршывсене 60 мĕлйун пăт тыра, 2.750 пин пăт аш-какай (чĕрĕ выльăх), 37,5 мĕлйун пăт тимĕр руди тăратмала пулнă. Анчах та радăри предатĕлсем халăха оккупантсене çак парăма тÿлеттерме пултарайман. Нимĕçсем çакна хĕçпăшаллă вăй пулăшнипе илме хăтланнă. Йалсене карательнăй отрйадсем тата реквизици отрйачĕсем йанă, вĕсем вăйпа мĕн илме май килнине пурне те сăптăрса илнĕ.

Центральнăй радă, хăйне пулăшма йутçĕршыв çарĕсене чĕннĕскер, нимĕн вăйсăр пулнăскер, Германи генералĕсем умĕнче чĕркуççи çинче тăнăскер, ăна халăх курайманскер, Украина çине хăйĕн колонийĕ çине пăхнă пек пăхнă захватчиксене кирлĕ пулман. Апрелĕн 29-мĕшĕнче нимĕç салтакĕсен взвочĕ радă çуртне йышăннă, унăн министрĕсене прикладсемпе хăваласа йанă. Çав кунах Вильгельмпа килĕшнĕ тăрăх Кийĕвра Черниговри помещикĕ—Скоропадски генерала Украинă гетманĕ туса хуни çинчен пĕлтернĕ. Вăл, Скоропадский, хăйĕн Берлинри хуçисем хушнисене пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртме пулнă.

Центральнăй радă тума пуçланă капиталисăмлă йĕркене халĕ ĕнтĕ куç-кĕретĕнех туса пынă.

Звенигородски уйесĕнчи Ганджуливка йалĕнче карательнăй експедици Каравайĕв именинчен илнĕ лашасене, инвентарсене хресченсенчен туртса илнĕ, хресченсене шомпăлсемпе хĕненĕ, хулĕсене парнă. Çав уйесри Павловка йалĕнче Лупенко помещик карательнăй отрйадпа пырса халăха харатма темиçе киле вут тĕртсе çунтарса йанă. Карателсем хресченсене пĕр çĕре хăваласа пухнă та хĕртнĕ тимĕрпе асаплантарнă, помещике „убытка“ тÿлеме, большевикла агитатăрсене тупса пама хушнă.

Нимĕç оккупанчĕсем çапла помещиксен влаçне кайала тавăрнă. Капиталиссем пуç пулса тăрассине те вĕсем çав метăдсемпех кайала тавăрнă. Профсойузсен правленисене прикладсемпе хăваласа салатнă, вĕсен çурчĕсене салтаксем йышăнса илнĕ. Савăт хуçисем, локаут тунипе ĕçукçине чакарма, хăйсен предприйатисене хупнă. Ĕççĕр тăрса йуласси пуçланнă. Продовольствине Германине вăйпа илсе тухса кайни Украинă ĕççыннисене выçлăх патне илсе çитернĕ. Тырпул хакĕсем рабочисене илмеле мар ÿснĕ.

Халăх тарăхни, пусмăрлакансене курайманни кашни кулленех ÿссе пынă. Май уйăхĕнче хресченсен восстанийĕсем пуçланса кайнă. Йелизаветград уйесĕнче темиçе йалти хресченсем, оккупантсемпе помещиксем çаратса пĕтернĕскерсем, пурте пĕр çĕре пĕрлешсе, нимĕçсен кавалери отрйачĕ çине трукăх пырса тапăннă, ăна аркатса тăкнă, лашисене, хĕçпăшалĕсене тытса илнĕ те партизансемпе пĕрле çапăçма кайнă. Çакăн хыççăн уйесра хайар çапăçусем пуçланса кайнă. Нимĕçсем артиллерипе самольотсене хута йанă.

Захватчиксем Йелизаветградри восстанине путарса лартма та ĕлкĕреймен пулнă, Звенигородски тата Таращчански уйессенче унтан та пысăк восстани тухса кайнă. Темиçе çĕр повстанĕцсем, иккĕшер пулеметсемпе, нумай мар винтовкăсемпе, ухута пăшалĕсемпе, хăйсем тунă пикăсемпе, пуртăсемпе тата çавасемпе хĕçпăшалланнăскерсем, асăрхамала мар, çÿллĕ ыраш çумĕпе Звенигородск патне пырса, кĕтмен хушăран нимĕç гарнизонĕ çине тапăннă. Нимĕçсен пĕр пайне пĕр самантрах çĕмĕрсе тăкнă, казармăсенчен тухса тарма ĕлкĕрейменнисен кĕске вăхăт хушши хирĕç тăнă хыççăн парăнмала пулнă. Повстанĕцсем хĕçпăшалсен арсеналне тытса илнĕ. Ийуль уйăхĕнче Звенигородскипе Таращчански уйессенче повстанĕцсен отрйачĕсене организациленнисем темиçе пин шутланнă. Вĕсен хăйсен штабĕ пулнă, вăл большевикла партин Кийĕври тата Черкасскри вăрттăн ĕçлекен комитечĕсемпе çыхăну тытса тăнă, пысăк çапăçува хатĕрленсе, çар ĕçне вĕреннĕ. Вĕсене хирĕç кăларса йанă нимĕçсен çарĕсене парăнтарнă. Ийуль уйăхĕнче повстанĕцсем Таращчански уйесĕн пысăк пайне нимĕçсен çарĕсенчен тасатнă. Йалсенче Совет влаçне туса хунă.

Ийуль уйăхĕн варринче пĕтĕм Украинăри чукунçул рабочийĕсен стачки пуçланса кайнă, вăл стачкă Германине продовольствисем турттарса кайассине чарса лартнă тата повстанĕцсемпе кĕрешме нимĕç çарĕсене илсе пырассине йăвăрлатса хунă. Нимĕçсен гарнизонĕсем, хуласем тăрăх вырнаçса тухнăскерсем, подкреплениесем пырасса кĕтсе тăнă. Повстанĕцсен йухăмĕ пысăккăн саралса кайнă пулнă, вăл пĕр уйесран тепĕр уйеса куçса пынă. Вăрттăн ĕçлекен большевиксен партийĕн организацийĕсем, пит те йăвăр условисенче йут çĕршывсен пусмăрне хирĕç кĕрешекен Украинăри рабочисемпе хресченсен кĕрешĕвне йертсе пынăскерсем, ревкомсемпе повстанĕцсен штабĕсене сарлакан туса пынă: вулăсрисене, уйесрисене, кĕпĕрнерисене. Вĕсене пĕтĕм Украинăри ревком йертсе пынă.

Пĕтĕмĕшлĕ восстани тума хатĕрлесе, большевиксем повстанĕцсен массисен представитĕлĕсен вăрттăн сиесĕсене туса ирттернĕ, листовкăсемпе хаçатсем кăларса тăнă. Вĕсене пĕтĕм çĕршыв тăрăх салатнă. Большевиксен организацийĕсем вăрттăн ĕçлессине нимĕç салтакĕсем хушшинче пысăккăн туса пынă. Вĕсем нимĕç салтакĕсене Германи интервенчĕсене хирĕç çĕкленĕ.

Нимĕçсен çарĕсем варвăрла террор туса пынă, артиллерирен персе йалсене çĕмĕрнĕ, мирлĕ халăхсене тискеррĕн пĕтерсе тăкнă. Анчах та восстани пурпĕрех сÿнсе ларман, вăл пĕтĕмĕшле характерлă пулса пыма пуçланă.

Август уйăхĕнче Черниговщинă, Полтавщинă тата Украинăри ытти чылай районсем те восстани вут-хĕмĕпе çунса тăнă. Массăсем вăхăтсăр, ним хатĕрленмесĕрех выступленисем тăвасшăн пулнă. Повстанĕцсен комитечĕсем вĕсене аран-аран тытса чарса тăнă.

Черниговщинăра повстанĕцсен чи вăйлă вучахĕ Нежинск уйесĕнче пулнă. Кунта помещиксем, гетманла нимĕç чиновникĕсем ийуль уйăхĕнчех те йалсенчен тухса тарма пуçланă. Августăн 5-мĕшĕнче çĕрле чиркÿ чанне çапсан, йалсенче пиншер çынсем çĕкленнĕ. Повстанĕцсем йалтах Нежина ыткăннă. Вĕсенчен нумайăшĕсем хăйсем тунă пикăсемпе хĕçпăшалланнă, винтовкăлисем сахал пулнă. Оккупантсем çав уйеса икĕ дивизине йахăн салтаксем илсе пырса, восстани тăвакансене йĕритавра хупăрласа илнĕ те виçĕ пин çынна йахăн персе вĕлернĕ. Тыткăна илнĕ хăшпĕр повстанĕцсене нимĕçсен палачĕсем алли-урисене касса вĕлернĕ. Нимĕçсем хупăрласа илнинчен çăлăнса тухма ĕлкĕрнисем çурçĕр Черниговщинă вăрманĕсене тарнă. Совет Роççийĕн чиккисем патне тарнă.

Кунта, çурçĕре, Совет Роççийĕн чикки патне, повстанĕцсен нумай йышлă ушкăнĕсемпе отрйачĕсем Украинăри пур районсенчен те тухса килнĕ. Кунта август уйăхĕн вĕçĕнче Днепр шыва урлă каçса, таращчански, звенигородски тата çапăçусенче пиçĕхнĕ ытти нумай отрйадсем те килнĕ. Кунта, нейтральнăй зонăра, нимĕçсем оккупаци тунă Украинăпа Совет Роççийĕне уйăрса тăнă выранта, Украинăри повстанĕцсем вырăс рабочийĕсемпе хресченĕсенчен йăланах тăванла пулăшу илме пултарнă. Вĕсене хĕçпăшалсем кирлĕ пулнă. Вăл хĕçпăшалсене вĕсем унта вырăс большевикĕсем урлă илсе тăнă. Вĕсене командăлă состава хатĕрленĕ кадрĕсем кирлĕ пулнă. Вырăс большевикĕсем вĕсене боевой командирсем хатĕрлеме пулăшнă. Кĕркунне тĕлне нейтральнăй зонă тенĕскер Украинăра револьуцилĕ центр пулса тăнă. Сапаланчăк отрйадсене кунта ротăсене, батальйонсене, полксемпе дивизисене йĕркеленĕ. Таращчански, Нежински, Новгород-Северски уйессенчи повстанĕцсенчен Таращчански, Нежински, Новгород-Северски полксем туса хунă.

Нейтральнăй зонăра туса йĕркеленĕ çарсен организатăрĕсенчен уйрăмах Николай Шчорс палăрса тăнă, вăл большевиксен партийĕ хушнипе кĕске срукрах партизансен массисенчен дисциплинăлă та лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ полк туса хума пултарнă.

Вăл вăхăтра револьуцилĕ вăйсем Украинăра хăвăрт ÿснĕ, большевиксем йертсе пынипе восстани организацилĕ формăсемпе пулса пыма пуçланă, нимĕçсен оккупацилĕ çарĕ хыттăн салапса пынă, хăйĕн çапăçу пултарулăхне пĕтерсе пынă.

Германи командованийĕн восстани тăвакан халăха хирĕç вăрçма парахнă чылай чаçсене ирĕксĕрех Украинăран кăларса каймала пулнă.

Октйабĕрĕн 20-мĕшĕнче Украинăри коммунисла партин 2-мĕш сиесĕ рабочисемпе хресченсене çапла чĕнсе каланă: „Татăклă çапăçуван вăхăчĕ çитсе пырать... Тăшмана вĕлермелех çĕмĕрсе тăкма хăвăрăн вăйсене организацилĕр!“

Пуçарулăх восстани туса оккупантсен гарнизонĕсене аркатса тăкнисен аллине куçнă. Унеч станцийĕн районĕнче Шчорс йертсе пыракан Богунски полк нимĕçсен çирĕплетсе тухнă темиçе гарнизонне çĕмĕрсе тăкнă, вăл гарнизонсем нейтральнăй зонă тăрăхĕпе вырнаçнă пулнă. Германи командованийĕ çĕмĕрсе тăкмала çапнине хирĕç ответлеме пултарайман, вăл повстанĕцсемпе калаçусем тума хăтланнă. Анчах Шчорс калаçу тăвассине йышăнман, вăл çапла пĕлтернĕ: Украинă халăхĕ захватчиксемпе нимĕнле калаçусем те тумасть,—тенĕ.

— Украинăран тухса вăркăнăр!—тесе пĕлтернĕ Шчорс нимĕç парламентерне повстанĕцсен мĕнпур массисен йачĕпе.

Гришино станцинче повстанĕцсем, нимĕçсене йĕритавра хупăрласа илсе, çапла каланă:—Пăшалсене пĕр çĕре пуçтарса лартăр, хăвăр вакунсене кĕрсе ларăр!

Германире нойабĕр уйăхĕнче пулнă револьуци нимĕçсен оккупацине салатса йарассине хăвăртлатнă. Салтаксем повстанĕцсемпе тăванлашма пуçланă, большевикла лозунгсем кăларса тăратма, Советсене суйлама пуçланă, халех хăйсен тăван çĕршывне кайала таврăнма ыйтнă, Ленин патне саламлă телеграммăсем йанă.

Нойабĕрĕн 13-мĕшĕнче Совет Роççийĕн правитĕлстви Брестри догăвăра пăрахăçа кăларни çинчен радио тăрăх пĕлтернĕ. Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Ленин пуçарнипе, вăл Украинă халăхĕ ирĕке тухассишĕн кĕрешнине йертсе пырас çĕре тÿрремĕнех хутшăнса ĕçленĕ, Украинă реввойенсоветне туса хунă, унăн пуçне Сталин йулташа лартнă. Хĕрлĕ çар повстанĕцсене пулăшма кайнă.

Ворошилăв йулташ, Х-мĕш çара йертсе пынăскер, войскасене çапла чĕнсе каланă: „Сийĕн курса асапланнă Украинăшăн илемлĕ те савăнăçлă кун çывхарать“. Нимĕç оккупанчĕсем интервентсемпе çапăçса ÿссе çирĕпленнĕ Хĕрлĕ çарпа халь ĕнтĕ вăрçма пултарайман.

Салтаксем ешалонсем çине ларма пуçланă. Германи командованийĕн çарсене илсе тухса кайасси çинчен приказ парассисĕр пуçне урăх нимĕн те йулман. Оккупантсем «евакуаци» тесе калани, чăннипе Хĕрлĕ çар хыттăн çапнипе намăс курсах кайала тарни пулнă.

Германипе Австрин виçĕ çĕр пинлĕ çарĕ тăхăр уйăх хушши Украинă халăхĕпе хайарран çапăçнă хыççăн, ниме йурахсăр çынсен йулашкийĕсем пулса йулнă. Украинăри повстанĕцсен сапаланчăк отрйачĕсем, захватчиксемпе çапăçса пиçĕхсе çирĕпленнĕскерсем, хăватлă Хĕрлĕ çарăн полкĕсемпе дивизийĕсем пулса тăнă, вĕсем нимĕçсен çарĕсене Украинăран темиçе эрне хушшинчех кăларса ывăтнă.

Çирĕм çул кайала Германи империалисĕсен Украина тытса илме хăтланни, ăна колони туса хăйсене пăхăнтарма хăтланни çапла пĕтсе ларнă та ĕнтĕ. Вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, Украинă халăхĕ Совет республикĕсен аслă туслăхĕпе пĕрле хăйĕн тăван çĕршывне тÿрелĕхпе сыхласа хăварнă.

Е. Герасимăв.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленийĕн йулашки

нинисăмăн пĕр кафедрине туса хумала.

в) Философи, истори, литературă факультечĕсем пур университетсемпе институтсенче, çав факультетсенче диалектикăлă тата историлĕ материалисăм курсне вĕрентессине сыхласа хăвармала.

г) ПСК(б)П Тĕпкомĕн пропагандăпа агитаци пайне тата Аслă шкулсен Пĕтĕм Сойузри комитетне 1939—40 çулти вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле марксисăм-ленинисăм кафедрисен руководителĕсене суйласа илсе, вĕсене ПСК(б)П Тĕпкомĕнче çирĕплетмешкĕн тăратма хушас. Нацкомпартисен Тĕпкомĕсене, ПСК(б)П крайкомĕсене, обкомĕсене тата хула комитечĕсене марксисăм-ленинисăм никĕсĕсем çинчен вĕрентме теори йенчен хатĕрленнĕ, политика йенчен тĕрĕсленнĕ преподаватĕлсем суйласа илме хушас.

д) Марксисăм-ленинисăмăн Аслă шкулĕ çумĕнче аслă шкулсене вальли марксисăм-ленинисăм преподаватĕлĕсене çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрлеме улттă уйăхлăх курс организацилес.

IV.

Марксисăм-ленинисăм пропагандине парти йенчен йертсе пырас ĕçе тепренех лайăхлатас шутпа, ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăнать:

18. ПСК(б)П Тĕпкомĕн, нацилĕ компартисен Тĕпкомĕсен, крайкомсен, обкомсен партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕсене тата пичетпе издатĕлствăсен пайĕсене пĕрлештерсе, пропагандăпа агитацин пĕрлĕхлĕ пайĕсем туса хурас.

19. Пропагандăпа агитаци пайĕсенче марксисăм-ленинисăмăн пичет урлă тата сăмахпа тăвакан пропагандăн тата массăлă политикăлла агитацин пĕтĕм ĕçне пĕтĕçтерес (партилĕ прессă; пропагандăпа агитаци литератури кăларасси; марксисăм-ленинисăма пичет урлă тата сăмахпа пропагандăласси организацилесси; пропагандисла ĕçĕн идейалă содержанине контроль туса тăрасси; пропагандиссен кадрĕсене суйласа илсе валеçесси; парти кадрĕсене политика тĕлĕшпе вĕрентсе хатĕрлесси тата çĕнĕрен вĕрентесси; массăлă политикăлă агитацие организацилесси).

Пропагандăпа агитаци пайĕсен ĕçĕн никĕсне—ПСК(б)П Тĕпкомĕн çак решенине практикăра пурнăçа кĕртессине хурас.

20. Марксисăм-ленинисăм пропагандин пахалăхне хăпартма, парти организацисем малашне пропагандă ĕçĕнче, правилă пекех, ытти пур ĕçрен те хăтарнă, хăйсене пĕтĕмпех çак ĕçе пама пултаракан, хăйсен теорилĕ тата пропагандисла квалификацине ывăнма пĕлмесĕр хăпартса пыма пултаракан йулташсем çине тайăнма кирлĕ тесе шутлас.

Çакна май ПСК(б)П обкомĕсемпе крайкомсене йаланлăха пропагандă ĕçĕнче ĕçлеме лайăх пропагандиссене уйăрса илме хушас.

21. Пропагандăпа агитаци пайĕсенче ĕçлеме парторгăнсен работникĕсене ытларах квалификацилĕ пропагандис - профессионалсемпе партилĕ литератăрсем шутĕнчен суйласа илмеле.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн, нацкомпартисен Тĕпкомĕсен, ПСК(б)П обкомсен, крайкомсен, хула комитечĕсен пропагандăпа агитаци пайĕсен составĕнче лектăрсен групписем организацилемеле.

22. Предприйатисенчи, учреждениисенчи кружоксен, çавăн пекех тата парти кабинечĕсен йышне сахаллатнă пирки хуласенче пропагандă работникĕсенчен пĕр пайĕ ĕçрен пушанна май, обкомсене, крайкомсене, нацкомпартисен Тĕпкомĕсене çак работниксенчен ытларах хатĕрленнисене йалла районсенче пропагандă ĕçне вăйлатмашкăн куçарма хушас.

23. ПСК(б)П хула комитечĕсемпе райкомсен халиччен пулнă культпропĕсене пропагандăпа агитаци пайĕсем туса реорганизацилес. Пропагандăпа агитаци пайĕсене культпропсем пулман райкомсенче те çавăн пекех тума кирлĕ, тесе шутлас. Çакăн пек йĕрке тăвас: парти райкомĕсенче пропагандăпа агитаци пайне тума квалификацилĕ работниксем тупса çитернĕ май, обкомсем, крайкомсем, нацкомпартисен Тĕпкомĕсем тăратнă тăрăх, ПСК(б)П Тĕпкомĕ кашни райкомшăн уйрăммăн ирĕк парать.

ПСК(б)П хула комитечĕсемпе райкомсен пропагандăпа агитаци пайĕсен составне хуларисемпе районсенчи парткабинетсене кĕртес, парткабинет пуçлăхĕсем, пĕр вăхăтрах, пропагандăпа агитаци пайĕсен пуçлăхĕн заместитĕлĕсем пулмала.

24. Обкомсен, крайкомсен, нацкомпарти Тĕпкомĕсен, окружкомсен, хула комитечĕсен, райкомсен пропагандăпа агитаци пайĕсен пуçлăхĕсене ПСК(б)П Тĕпкомĕ çирĕплетмеле тăвас, çак комитетсен пропагандăпа агитаци пайĕсен ытти пĕтĕм ответлă работникĕсене обкомсен, крайкомсен, нацкомпартисен Тĕпкомĕсен бÿровĕсем çирĕплетеççĕ.

Обкомсене, крайкомсене, нацилĕ компартисен Тĕпкомĕсене пропагандăпа агитаци пайĕсен работникĕсене икĕ уйăхлă срукра пĕтĕмпех тупса çитерсе çирĕплетме хушас.

25. Маркс—Енгельс—Ленин институчĕн ĕçĕ марксисăм-ленинисăм пропагандипе таччăн çыхăнса тăнине хисепе илсе, Маркс—Енгельс—Ленин институтне ПСК(б)П Тĕпкомĕн пропагандăпа агитаци пайне пама кирлĕ, тесе шутлас.

26. ПСК(б)П Тĕпкомĕ партин пĕтĕм комитечĕсене марксисăм-ленинисăм пропагандине—большевиксен партийĕн тăван ĕçне тимлĕн туса пыма хушать. Парти комитечĕсем пропагандă ĕçне чăннипе, унăн содержанине тарăннăн пĕлнипе йертсе пыма тивĕçлĕ. Обкомсен, крайкомсен, нацкомпартисен Тĕпкомĕсен марксисăм-ленинисăм пропагандине çак постановленине майлăн урăхлатса çĕнетес пĕтĕм ĕçĕн организацине йертсе пырассине хăйсен аллине илмелле.

Партилĕ пропагандăн пĕтĕм ĕçне Тĕпкомăн çак решенийĕ тăрăх урăхлатса çĕнетме парти органĕсем йенчен уйрăмах тимлĕх хуни тата тăрăшни кирлĕ пулни çинчен пĕтĕм парти организацийĕсене кăтартса парса, Тĕпком парторганизацисене пропагандă ĕçне çĕнетесси çине механически-формальнă пăхас хăрушлăхран, пропагандă ĕçĕн пĕтĕм иртнĕ опытне мĕнле те пулсан чуххăмăн тиркесе тăкасран асăрхаттарать.

Парти пропаганди ĕçне йертсе пырассине лайăхлатас шутпа, кашни хула комитетĕнче, обкомра, крайкомра, нацкомпартисен Тĕпкомĕнче пропагандăпа агитаци ĕçне организацилессин тата унăн содержанийĕн ыйтăвĕпе кăна ĕçлекен çекретар пулмала.

* * *

ПСК(б)П Тĕпкомĕ райкомсене, хула комитечĕсене, обкомсене, крайкомсене, нацилĕ компартисен Тĕпкомĕсене, çак решенине парти активĕпе партин пĕтĕм членĕсене ăнлантарса пама хушать.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ çакна палăртса парать: „Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин Историйĕ“ пичетленсе тухни пирĕн парти, комсомол, совет, профсойуз, хуçалăх, культура работникĕсен кадрĕсем, пĕтĕм совет интеллигенцин кадрĕсем хăйсем теори тĕлĕшпе кайа йулнине пĕтерес йенне çавăрнассин пуçламăшĕ пулмала.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ“ пирĕн партипе совет халăхĕн пурнăçĕнче идейалă-политикăлă çĕнĕ хăватлă çĕкленĕвне пуçарса йарать.

Обществăлă аталанăвăн саккунĕсене пĕлнипе хĕçпăшаллантаракан марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла илсе пырса, пирĕн кадрсем, чăн-чăнах никам çĕнтереймен пулса тăрĕç, çак теори йалавĕ айне тăрса, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе пĕтĕм совет халăхне коммунисăм çĕнтерĕвĕ патне тата ăнăçлăрах илсе пырĕç.

1938 çулти нойабĕрĕн 14-мĕш.

1939 çулхи çуракинче суртлă вăрлăхсемпе акмали, вăрлăхсен страхфондне тумали тата çуракинче акма суртлă çурхи тырăсен вăрлăхĕсене улăштармали план çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1939 çулта çурхи пур тырăсене те суртлă тата пысăк пахалăхлă вăрлăхсемпе çеç акса хăвармала, тесе шутлать, çавна асра тытса çапла йышăнать:

1. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ 1939 çулта колхозсенче çурхи кулътурăсене суртлă вăрлăхсемпе: тулă—52.000 гектар, сĕлĕ—122.200 гектар, урпа—6.000 гектар, пăрçа—24.100 гектар, йасмăк—13.400 гектар тата вир—5.000 гектар акма палăртса хатĕрленĕ плана çирĕплетес,—çавна районсем тата суртсем тăрăх 1-мĕш номĕрлĕ хушса кĕртнинче кăтартнă пек валеçсе парас.

2. 1939 çулта колхозсенче çурхи тырăсене акмали вăрлăх фончĕн планне çакăн пек палăртса парас: тĕш тырăсен тата пăрçа йышши кулътурăсен—506.057 центнĕр, техникălă кулътурăсен—14.800 центнĕр, нумай çул хушши ӳсекен курăксен вăрлăхĕсем—9.11 9 центнĕр, лупин 800 центнĕр.—çавна районсем тата кулътурăсем тăрăх 2-мĕш номĕрлĕ хушса кĕртвинче кăтартнă пек валеçсе парас.

Страховой фондсене, йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх, вăрлăх мĕнпурĕ кирлинчен 10—15 процент таран хывмала.

Райĕçтăвкомсене вăрлăхсен страховой фондне кулътурăсем тата суртсем тăрăх суртлă вăрлăхсемпе акмали тата вăрлăх фончĕсем тумали планпа килĕшсе халех тума тытăнма хушас.

3. Вăрлăхсен страховой фондне туса çитермели срука—1938 çулхи декабĕрĕн 1-мĕшне палăртас. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата райĕçтăвкомсене пĕтĕм вăрлăхсене суртласа трийĕр витĕр кăларма хушас. Вăрлăхсен страховой фончĕсене хумали складсене тĕплĕн хатĕрлемеле, сăвăссенчен (клешчсенчен) тата ытти сийенлекенсенчен дезинфекци туса тасатмала. Вăрлăхсене суртсем тата категорисем тăрăх çирĕп пăхăнса хумала.

4. Колхозсенче тата районсенче суртлă вăрлăхсем çителĕклĕ пулччăр тесе тата вăрлăхлăх участкăсене пысăкрах пахалăхлă вырлăхсемпе акса хăвармала пултăр тесе, колхозсем хушшинче суртлă вăрлăхсем 21.047 центнĕр улăштарма, районсем хушшинче 2633 центнĕр улăштарма план çирĕплетес,—çавна кулътурăсем, суртсем тата районсем тăрăх 3-мĕш номĕрлĕ хушса кĕртнинче кăтартнă пек валеçсе парас.

Вăрлăхсене 1, 2, 3-мĕш категорилĕ вăрлăхсемпе улăштармала. 4-мĕш категорипе улăштарма хуçалăх йенчен усси çук, тесе шутлас, çавăнпа унпа улăштармала мар. Райçĕрĕç пайĕсене колхозсенчи 4-ш категорилĕ вăрлăхлăх ытлашши сĕлĕне уйрăм распорйажени пуличчен сыхласа усрама хушас.

Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата райĕçтăвкомсене суртлă вăрлăхсемпе улăштарас ĕçе халех тытăнса, 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшчен кайа йулмасăр туса пĕтерме хушас. Суртлă вăрлăхсемпе улăштарас тата документацине тĕрĕс тăвас ответлăха райçĕрĕç пайĕсен заведуйушчисем çине хурас.

5. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вăрлăхлăх участкăсене уйăрас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлеменнине, чылай çĕрте участкăсене уйăрасси çине формалън пăхнине палăртса, Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата райĕçтăвкомсене халех вăрлăхлăх акмали участкăсене уйăрма тата вĕсене тĕплĕн хатĕрлеме хушать. Вăрлăхлăх участкăсене пысăк пахалăхлă суртсемпе акса хăвармала.

6. Тĕрĕс пусуçаврăнăшсем тăвас тĕлĕшпе пыракан ĕçсене май, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вăрлăх фончĕсене пусуçаврăнăшсемпе килĕшсе тăвасси çине, уйрăмах пăрçа йышши кулътурăсене, çĕрулми тата нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхĕсем çине тимлĕн пăхма хушать,—çав вăрлăхсем пулман пирки пусуçаврăнăшсем пуринчен ытла пăтранаççĕ.

7. Райĕçтăвкомсене колхозсенче халех пĕтĕм вăрлăхсене суртлас тата трийĕр витĕр кăларас ĕçе организацилеме хушас. Суртлама тата трийĕр витĕр кăларма çурхи тырăсем—580 579 центнĕр, кĕрхи тырăсем (куçакан фонд)—242.400 центнĕр палăртас.

Çĕрĕç Халăх Комиссариатне районсенчи вăрлăх лабораторисем урлă вăрлăхсен пахалăхне икĕ хутчен тĕрĕслессине организацилеме хушас, пĕррĕмĕш тĕрĕслӳве 1939 çулти йанварĕн 1-мĕш тĕлне, иккĕмĕшне—мартăн 15-мĕш тĕлне туса пĕтермеле.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ **Ф. Артемйĕв.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕшĕн **В. Лебедĕв.**

Шупашкар хули.

1938 çулти октăбĕрĕн 26-мĕшĕ.

Хушса кĕртни 1-мĕш №

1938 çулта Чăваш АССР-че çурхи суртлă тырăсене акмали лаптăксем (гектарпа)

Районсем	„Лутесценс 062“ тулă		„Винер“ урпа		Вырăнти урпа		„Московский А 315“ сĕлĕ		„Диппе“ сĕлĕ		„Виктория“ пăрçа		„Капитал“ пăрçа		„Тарелочная“ йасмăк		„Кр. тойденски“ йасмăк	
	Пĕтĕмпе	Вăл шутран вăрлăхлăх	Пĕтĕмпе	Вăл шутран вăрлăхлăх	Пĕтĕмпе	Вăл шутран вăрлăхлăх	Пĕтĕмпе	Вăл шутран вăрлăхлăх	Пĕтĕмпе	Вăл шутран вăрлăхлăх	Пĕтĕмпе	Вăл шутран вăрлăхлăх	Пĕтĕмпе	Вăл шутран вăрлăхлăх	Пĕтĕмпе	Вăл шутран вăрлăхлăх	Пĕтĕмпе	Вăл шутран вăрлăхлăх
Улатăр	1700	255	—	—	—	—	2111	338	2000	320	250	50	450	90	160	32	925	50
Елĕк	2000	300	150	21	—	—	550	88	6897	1102	95	19	850	170	700	140	—	—
Патăрйел	2700	400	50	8	—	—	500	80	4847	776	450	90	745	149	870	174	235	12
Вăрнар	2420	363	320	50	—	—	188	29	6395	1020	650	130	850	170	530	106	100	5
Йĕпреç	2040	306	—	—	—	—	400	56	2837	454	655	131	260	52	400	80	200	10
Ишлей	1570	235	300	48	70	11	—	—	5136	821	200	40	1300	260	725	145	—	—
Канаш	1930	290	150	24	—	—	3146	502	1000	160	200	40	500	100	300	60	—	—
Куславкка	2250	338	790	126	70	11	500	80	3942	6̇0	150	30	1150	2̇0	920	184	—	—
Хĕрлĕ Чутай	1550	233	50	8	—	—	—	—	4493	718	150	30	700	140	740	148	330	16
Кувакинă	2300	395	—	—	—	—	3028	485	708	112	84	17	791	158	550	110	1000	50
Сĕнтĕрвăрри	2420	363	450	72	—	—	1150	184	2498	399	75	15	825	165	300	60	—	—
Пăрачкав	2000	300	—	—	—	—	4441	710	370	60	20	4	730	146	175	35	1100	55
Турхан	1070	170	—	—	—	—	100	16	2282	364	400	80	50	10	350	70	170	9
Тутаркас	2050	310	770	123	—	—	1119	179	5784	925	600	120	500	100	550	110	—	—
Трак	2000	300	170	27	200	32	350	56	4803	768	940	188	160	32	690	138	—	—
Вăрмар	2500	375	600	96	—	—	654	105	5690	910	195	39	1425	285	1160	232	—	—
Çĕрпӳ	2550	383	140	22	90	15	4713	754	1441	230	800	160	800	160	1130	226	—	—
Шупашкар	2400	360	—	—	750	120	700	112	3302	528	400	80	300	60	400	80	—	—
Шăмăршă	1350	202	—	—	—	—	100	16	3200	512	115	23	485	97	555	110	140	7
Шăхасан	2500	375	350	56	—	—	600	96	5422	867	200	40	950	190	430	86	—	—
Шăнкăртам	1400	210	—	—	—	—	522	83	2813	450	500	100	—	—	510	102	100	5
Çĕмĕрле	1000	150	—	—	80	13	500	80	3154	504	—	—	650	130	70	14	200	10
Йетĕрне	1700	255	150	24	—	—	420	67	5028	804	123	25	477	95	185	37	225	11
Йелчĕк	4700	705	—	—	—	—	—	—	7364	1179	400	80	400	80	300	60	275	14
Тăвай	1900	285	250	40	50	8	3502	560	1500	240	400	80	700	140	700	140	—	—
Республикĕпе	52000	7858	4690	748	1310	210	29294	4676	92906	14853	8052	1611	16048	3209	13400	2679	5000	254

Хушса кĕртни 2-мĕш №

Колхозсенче 1938 çулти тырпултан 1939 çулта çуркунне акмали вăрлăх фончĕсене тумали план (центнĕрпа)

Районсем	Тулă	Урпа	Сĕлĕ	Пăрă	Хуратул	Вир	Пăрçа	Йасмăк	Викă	Лупин	Йĕтĕн вăрри	Кантăр вăрри	Нумай çул ӳсекен курăксен вăрри
Улатăр	3230	—	9027	—	130	277	980	208	1495	120	560	—	240
Елĕк	3800	300	16483	650	78	—	1323	910	2951	120	—	1400	480
Патăрйел	5130	100	12206	500	312	70	1673	1130	2808	—	—	620	385
Вăрнар	4598	640	14986	150	364	30	2100	689	3380	100	160	460	487
Йĕпреç	3876	—	7384	160	338	60	1281	520	1690	60	440	260	373
Ишлей	2983	740	11812	200	260	—	2100	942	2860	—	—	400	395
Канаш	3667	300	9146	240	130	—	980	390	1586	100	—	320	317
Куславкка	4275	1720	9773	100	91	—	1820	1196	1651	—	—	180	386
Хĕрлĕ Чутай	2945	100	10176	30	130	99	1190	962	2210	—	480	520	322
Кувакинă	4370	—	8312	—	273	300	1225	715	1560	50	720	—	310
Сĕнтĕрвăрри	4598	900	8416	210	182	—	1260	390	2070	—	—	160	352
Пăрачкав	3800	—	10602	—	910	330	1050	227	4820	60	880	—	400
Турхан	2033	—	5380	120	247	51	630	455	1154	—	440	240	235
Тутаркас	3895	1540	15276	400	—	—	1540	715	2730	50	—	730	456
Трак	3800	740	11566	360	—	—	1540	897	2340	—	—	680	378
Вăрмар	4750	1200	14543	360	195	—	2268	1508	3445	—	—	460	498
Çĕрпӳ	4845	460	14058	120	195	—	2240	1469	3250	—	—	520	480
Шупашкар	4560	1500	9334	240	—	—	980	520	2470	—	—	240	368
Шăмăршă	2565	—	7510	200	312	42	840	722	1690	—	—	150	171
Шăхасан	4750	700	13234	300	247	—	1610	559	2210	100	—	480	379
Шăнкăртам	2660	—	7510	120	312	30	700	663	1560	—	—	120	240
Çĕмĕрле	1900	160	8043	—	98	60	910	91	1365	—	720	220	315
Йетĕрне	3230	300	12576	120	117	67	840	240	3120	—	400	780	368
Йелчĕк	8930	—	16618	120	150	82	1120	390	3510	—	—	600	448
Тăвай	3610	600	11229	300	130	—	1540	910	2275	40	—	460	336
Республикĕпе	98800	12000	275200	5000	5201	1498	33740	17418	57200	800	4800	10000	9119

Хушса кĕртни 3-мĕш №

Чăваш республикĕ тăрăх 1939 çулхи çураки валъли колхозсем тата районсем хушшинче суртлă вăрлăхсемпе улăштармали план (центнĕрпа)

РАЙОНСЕМ	„Лутесценс 062“ тулă				„Московский А 315“ сĕлĕ				„Диппе“ сĕлĕ			
	Пĕтĕмпе	Колхозсем хушшинче	Районсем хушшинче	Хăш районран	Пĕтĕмпе	Колхозсем хушшинче	Районсем хушшинче	Хăш районран	Пĕтĕмпе	Колхозсем хушшинче	Районсем хушшинче	Хăш районран
Улатăр	310	210	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Елĕк	114	114	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Патăрйел	720	720	—	—	—	—	—	—	112	112	—	—
Вăрнар	1425	785	640	Çĕмĕрле	—	—	—	—	—	—	—	—
Йĕпреç	439	439	—	—	—	—	—	—	922	922	—	—
Ишлей	600	600	—	—	—	—	—	—	600	600	—	—
Канаш	870	140	730	Тăвай	—	—	—	—	—	—	—	—
Куславкка	245	245	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Хĕрлĕ Чутай	252	252	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Кувакинă	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Сĕнтĕрвăрри	220	220	—	—	70	70	—	—	344	344	—	—
Пăрачкав	110	110	—	—	—	—	—	—	32	32	—	—
Турхан	970	270	700	Шăнкăртам	—	—	—	—	—	—	—	—
Тутаркас	750	550	200	Шупашкар	—	—	—	—	—	—	—	—
Трак	350	350	—	—	—	—	—	—	1800	1800	—	—
Вăрмар	520	520	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Çĕрпӳ	880	880	—	—	140	140	—	—	100	100	—	—
Шупашкар	300	300	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Шăмăршă	60	60	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Шăхасан	252	252	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Шăнкăртам	162	162	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Çĕмĕрле	268	268	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Йетĕрне	200	200	—	—	—	—	—	—	1500	1500	—	—
Йелчĕк	260	260	—	—	—	—	—	—	1600	1600	—	—
Тăвай	266	266	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Республикĕпе	10543	8273	2270	—	210	210	—	—	7010	7010	—	—

РАЙОНСЕМ	„Капитал“ пăрçа				„Виктория“ пăрçа				„Тарелочная“ йасмăк			
	Пĕтĕмпе	Колхозсем хушшинче	Районсем хушшинче	Хăш районран	Пĕтĕмпе	Колхозсем хушшинче	Районсем хушшинче	Хăш районран	Пĕтĕмпе	Колхозсем хушшинче	Районсем хушшинче	Хăш районран
Улатăр	60	60	—	—	—	—	—	—	70	70	—	—
Елĕк	38	38	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Патăрйел	30	30	—	—	20	20	—	—	10	10	—	—
Вăрнар	454	424	30	Канаш	102	102	—	—	153	153	—	—
Йĕпреç	—	—	—	—	30	30	—	—	70	70	—	—
Ишлей	—	—	—	—	—	—	—	—	20	20	—	—
Канаш	60	60	—	—	—	—	—	—	36	36	—	—
Куславкка	375	285	90	Вăрмар	48	48	—	—	—	—	—	—
Хĕрлĕ Чутай	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Кувакинă	56	56	—	—	—	—	—	—	15	15	—	—
Сĕнтĕрвăрри	130	130	—	—	—	—	—	—	35	35	—	—
Пăрачкав	33	33	—	—	—	—	—	—	32	32	—	—
Турхан	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Тутаркас	140	140	—	—	16	16	—	—	15	15	—	—
Трак	60	60	—	—	207	207	—	—	80	80	—	—
Вăрмар	—	—	—	—	50	50	—	—	75	75	—	—
Çĕрпӳ	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Шупашкар	70	70	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Шăмăршă	210	210	—	—	20	20	—	—	—	—	—	—
Шăхасан	150	150	—	—	—	—	—	—	60	60	—	—
Шăнкăртам	—	—	—	—	—	—	—	—	90	90	—	—
Çĕмĕрле	337	210	50 77	Пăрачкав Кувакинă	—	—	—	—	—	—	—	—
Йетĕрне	80	80	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
Йелчĕк	95	95	—	—	—	—	—	—	60	60	—	—
Тăвай	220	220	—	—	209	209	—	—	50	50	—	—
Республикĕпе	2598	2351	247	—	702	702	—	—	871	871	—	—

РАЙОНСЕМ	Вырăнти суртлă урпа				„Винер“ урпа				„Кр. тойденски“ вир			
	Пĕтĕмпе	Колхозсем хушшинче	Районсем хушшинче	Хăш районран	Пĕтĕмпе	Колхозсем хушшинче	Районсем хушшинче	Хăш районран	Пĕтĕмпе	Колхозсем хушшинче	Районсем хушшинче	Хăш районран
Улатăр									45	45	—	—
Елĕк									—	—	—	—
Патăрйел					50	—	50	Тăвай	35	35	—	—
Вăрнар									21	21	—	—
Йĕпреç									2	2	—	—
Ишлей									—	—	—	—
Канаш									—	—	—	—
Куславкка					350	350	—	—	—	—	—	—
Хĕрлĕ Чутай									85	85	—	—
Кувакинă												
Сĕнтĕрвăрри					150	150	—	—	—	—	—	—
Пăрачкав									4	4	—	—
Турхан									32	32	—	—
Тутаркас					190	190	—	—	—			
Трак							—					
Вăрмар					120	120		—				
Çĕрпӳ												
Шупашкар	500	500	—	—								
Шăмăршă												
Шăхасан					50	50	—	—	—			
Шăнкăртам									16	6	10	Кувакинă
Çĕмĕрле												
Йетĕрне									56		56	Кувакинă
Йелчĕк									40	40	—	—
Тăвай									—	—	—	—
Республикĕпе	500	500	—	—	910	860	50	—	336	270	66	—

ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ Совет Сойузĕн Геройĕ П. И. Пумпур й. Вăрнарта

ВĂРНАР. Нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ — Совет Сойузĕн Геройĕ Петр Иванăвич ПУМПУР йулташ Вăрнар районне, хăйĕн суйлавçисем патне, килнĕ. Çав кунах вăл МТС-ра пулса, тракторисен курсĕнче вĕренекенсемпе тĕл пулса калаçнă.

Нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче Пумпур йулташ Колъцовкăри Сталин йачĕпе тăракан, Булатăвари Молотăв йачĕпе тăракан, Мамалайри Ворошилăв йачĕпе тăракан, Уравăшри „Майăн 1-мĕшĕ“ колхозсенче пулнă. Асăннă колхозсенче Пумпур йулташ çентăбĕр уйăхĕнче те пулнăччĕ.

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Пумпур йулташ пионерсен районри слъотĕнче пулать.

Крыма Врангĕл бандисенчен тасатни 18 çул

Крым республикĕнчи ĕçсыннисем Крыма Врангĕл бандисенчен тасатнăранна вунсакăр çул тултарнине паллă тăваççĕ.

Чаплă кун йачĕпе пĕтĕм республикă тăрăх пухусемпе калаçусем туса иртереççĕ. Шургвардейĕцсен бандисене çапса салатнă Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕ çинчен ĕçсыннисем ăшă кăмăлпа аса илеççĕ.

Перекопра, Совет Крымĕшĕн çапăçса вилнĕ паттăрсен тăванлă масарĕ çинче, нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче рабочисен, колхозниксемпе служăшчисен икĕ пин çынлă митингĕ пулса иртнĕ.

Митингра тухса каланисенчен пĕри—Строганăвкă йалĕнчи колхозник Иван Иванăвич Оленчук. Оленчук йулташ 1920 çулти нойабĕр уйăхĕнчи тĕттĕм çĕрле Хĕрлĕ Çарăн Перекопа штурмлакан чаçĕсене Сиваш урлă илсе каçнă.

(ТАСС).

Троцкиссем провокацилĕ ĕçсем тăваççĕ

Прагăра киревсĕр ĕçсем туса пынă троцкисла шпионсем провокацилĕ ĕçсем туни Чехословакири демократилĕ общĕствĕннăçа хытă тарăхтарса çиллентерет.

Çак кунсенче троцкиссем „Руде право“ йатлă хаçат кăларнă. Вăл хаçат çийелтен пăхма нумай пулмасть хупса лартнă коммунисла „Руде право“ хаçат йеверлех.

Хаçатра халăха чĕнсе калани пур, ун айне Чехословакири коммунисла парти Тĕпкомĕ алă пуснă пек тунă. Халъхи вăхăтра, троцкиссен çав суйа документĕпе усă курса, фашисла пичет коммунистене хирĕç урса кайсах çырать, коммунистсем вăрттăн ĕçсене вăйлăн сарса йанă, „государствălă переворот“ тума хатĕрленеççĕ, тесе суйа хыпар сарать.

(ТАСС).

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 566

Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 837. ф. 6. 58×84 п. л.

П